Книга пос.

22-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 МАРТ 8 ВЫРСАРНИКУН 57(6082) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери коммунистла кунĕ— мартăн 8-мĕш çинчен

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партийĕн Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановлени

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партийĕн Центральнăй Комитечĕ работницăсене, колхозницăсене, умственнăй ĕçри хĕрарăм-работниксене, партизанкăсене, фронтра ĕçлекен санитаркăсене, врачсене, сестрасене, связисткăсене тата Совет Союзĕнчи ĕççыннин хĕрарăмсене пурне те Хĕрарăмсен Пĕтĕм тĕнчери коммунистла кунĕ — Мартăн 8-мĕш ячĕпе саламлать.

Кăçалхи çул Мартăн 8-мĕш кунне совет хĕрарăмĕсем совет халăхĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене, пирĕн тăван çĕршыв çине ирсĕррĕн те ултавлăн тапăннăскерсене, хирĕç туса пыракан ирĕклĕхлĕ отечественнăй вăрçăн хаяр обстановкинче кĕтсе илеççĕ. Совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем хамăрăн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлеме пĕр çын пек çĕкленчĕç.

Гитлерăн йыткĕтĕвĕсем хăйсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче рабочисен, хресченсен, интеллигенцин ĕçĕпе тунă пирĕн хуласемпе ялсене варвăрла аркатаççĕ, мирлĕ халăхсене çаратаççĕ, пусмăрлаççĕ, вĕлереççĕ. Нимĕç захватчикĕсем совет хĕрарăмĕнчен ирĕклĕ пурнăç правине туртса илме, Совет влаçĕ хĕрарăмсене панă пур ырлăхсене те пĕтерсе тăкма, хĕрпе хĕрарăма нимĕç князĕсемпе баронĕсен правăсăр чури туса хума тăрăшаççĕ. Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем хĕрарăмсен куçĕ умĕнчех вĕсен ачи-пăчисене вĕлереççĕ, вĕсен çамрăк хĕрĕсене пусмăрласа намăслантараççĕ, хĕрарăмсемпе хĕрсенчен мăшкăллаççĕ, кайран вара вĕсене вĕлереççĕ, çемьи-çемьипе вутта пăрахса çунтарса яраççĕ.

Ĕççынни хĕрарăмĕсен чĕрисем çавтери аслă çилĕпе, нимĕçсен захватчикĕсене хаяррăн курайманнипе тулса тăраççĕ. Ĕççынни хĕрарăмĕсене совет стройĕ обществăллă пурнăçăн пур отраслĕсенче те творчествăллă ĕçлеме вĕçĕ-хĕррисĕр майсем туса пачĕ. СССР Верховнăй Совечĕн, союзлă, автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен депутачĕсем хушшинче 1700 çын ытла хĕрарăмсем, вырăнти советсен депутачĕсем хушшинче хĕрарăмсем çур миллион çын ытла шутланаççĕ. Вĕсем совет халăхĕ суйласа лартнă пĕртан правăллă избранниксем пулса, государство управленин ĕçĕнче хутшăнса ĕçлеççĕ. Совет хĕрарăмĕсем миллион çынна яхăн инженерсем, техниксем, учительницăсем, врачсем, научнăй работниксем, агрономсем пулса ĕçлеççĕ; вĕсем ĕнтĕ çĕнĕ, халăхран тухнă, совет влаçĕ воспитани панă интеллигенци представителĕсем пулса тăраççĕ. Совет хĕрарăмĕсем, халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те арçынсемпе пĕр танах ĕçлесе, çĕнĕ пурнăçа активлăн ĕçлесе туса пынă, халĕ те туса пыраççĕ.

Совет влаçĕн çулĕсенче совет хĕрарăмĕн культурăллă ӳсĕмĕ, халăхăн материальнăй ырлăхĕ çавтери ӳссе кайрĕ. Совет государстви хĕрарăмшăн çавтери тăрăшать, ача учрежденийĕсене тытса тăма, нумай ачаллă амăшĕсене пособи парса пулăшма питĕ нумай укçа-тенкĕ парать.

Халĕ ĕнтĕ çаксем çинче пурин çине те ирсĕр тăшман килсе тапăнчĕ. Çавăнпа та миллионшар совет хĕрарăмĕсем хăйсен ывăлĕсене ултавлă та ирсĕр тăшмана хирĕç çапăçма ăсатаççĕ, хăйсен юратăвĕпе вĕсен паттăрлăхне çирĕплетеççĕ, нимĕç оккупанчĕсене хаярран таварма, пĕтерсе тăкма чĕнеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ совет патриоткисем ылханлă тăшмана аркатмашкăн Хĕрлĕ Çара хăйсене хăйсем шеллемесĕр пулăшаççĕ. Вĕсем партизанла отрядсенче артиллерипе минометсен вут-çулăмĕ айĕнче гитлеровецсене хирĕç çапăçаççĕ. Хĕрарăм-врачсем, сестрасем, дружинницăсем аманнă боецсене вилĕмрен паттăррăн çăлса хăвараççĕ. Мускаври, Ленинградри тата ытти хуласенчи хĕрарăмсем сывлăшран тапăннинчен хӳтĕленес тĕлĕшпе хăюлăх, паттăрлăхпа геройлăх кăтартса параççĕ. Совет патриоткисем çар ĕçĕпе санитари ĕçне хавхаланса вĕренсе пыраççĕ, винтовкăна, гранатăна, миномета, пулемета тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсене вĕренеççĕ, госпитальсенче медицина практикинче пулаççĕ. Çĕршер пин хĕрарăмсем, хăрушлăхран хăрамасăр, час-часах тăшман самолечĕсем пулеметран персе тăнă вăхăтра, оборона рубежĕсем турĕç. Советăн пиншер патриоткисем, юратнă совет боецĕсен пурнăçне çăлса хăварас тесе, хăйсен юнне параççĕ, аманнисемшĕн юратса тăрăшаççĕ, тăван çĕршывăн оборона фончĕ валли укçа-тенкĕ пухаççĕ, фронтри боецсем валли тĕрлĕ парнесемпе ăшă тумтирсем ярса параççĕ, отечественнăй вăрçăра хăйсен ашшĕ-амăшĕсене çухатнă тăлăх ача-пăчасемшĕн тăван амăшĕсем пек тăрăшса, Совет хĕрарăмĕсем государствăна çĕнĕ ăру çитĕнтерме пулăшаççĕ. Совет патриоткисем фронтпа тылăн пĕрлĕхне хăйсен мĕнпур вăйне хурса ывăна пĕлмесĕр çирĕплетсе пыраççĕ.

Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа хĕрарăмсен промышленноçри вырăнĕ татах та ытларах ӳсрĕ, уйрăмăнах промышленноçăн ертсе пыракан отраслĕсенче ӳсрĕ. Промышленноçра ĕçлекен хĕрарăмсен хисепĕ 1941 çулăн октябрь уйăхĕ тĕлнех ĕнтĕ промышленноçра ĕçлекен пур рабочисен хисепĕн 45 процентне çитрĕ, ытти уйăхсенче фабрикăсемпе заводсене çĕнĕрен çĕршер пин хĕрарăмсем пычĕç. Совет хĕрарăмĕсем производствăри çĕнĕ профессисене ăнăçлăн вĕренсе пыраççĕ, фронта кайнă арçынсем вырăнне тăрса ĕçлеççĕ. Чугунçул транспорчĕн техникине вĕренес енĕпе пур чугунçулсем çинче те хĕрарăмсен массăллă движенийĕ пуçланчĕ.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче хĕрарăмсен ялхуçалăхĕнчи вырăнĕ уйрăмăнах ӳсрĕ. Колхоз пурнăçĕнче, колхоз производствинче колхозница ĕçе татса паракан вăй пулса тăчĕ. Малта пыракан пиншер колхозницăсем колхозсене ертсе пыраççĕ, бригадăсене, звеносене, выльăх-чĕрлĕх фермисене ертсе пыраççĕ, обществăллă артель хуçалăхне пур майсемпе те тĕреклетеççĕ. Совет Союзĕнчи çĕршер пин хĕрарăмсем трактористка, комбайнера тухрĕç, МТС-че ремонт ĕçĕнчи рабочисем пулчĕç, ялхуçалăхĕн паха техникине алла илчĕç.

Наукăпа культура фронтĕнче хăйсен вăйĕпе пĕлĕвне тăван çĕршыва сыхланă çĕре парса, хĕрарăмсем пысăк та усăллă ĕç тăваççĕ.

Кăçал хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунне Совет Союзĕн çар вăй-хăватне татах та ытларах çирĕплетес, çĕршывăн пĕтĕм вăйне, пĕтĕм резервĕсене фронта пулăшма мобилизацилес лозунгпа ирттермелле.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партин Центральнăй Комитечĕ партин пур организацийĕсене те хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунне, Мартăн 8-мĕшне, массăллă-политикăллă кампани вырăнне хурса ирттерме хушать. Парти организацийĕсен халĕ, вĕсен ачисем тата упăшкисемпе пичĕшĕсем отечественнăй вăрçăн фронтĕнче тăван çĕршывăн чапĕпе ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ вăхăтра, хăйсене шеллемесĕр ĕçлесе фронта пулăшни кашни совет патриоткин таса тивĕçлĕхĕ пулса тăни çинчен ĕççынни хĕрарăмĕсене анлăн ăнлантарса парас пулать. Пĕр хĕрарăм та, хулара та, ялта та, обществăллă-усăллă ĕçĕн тулашĕнче ан юлтăр. Парти, совет, профсоюз организацийĕсен малта пыракан хĕрарăмсемпе хĕрсене совет, хуçалăх, обществăллă организацисенче ертсе пырас ĕçе лартма пур майпа та тăрăшмалла, вĕсене çав ĕçре ӳсме пулăшса пымалла. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç отечественнăй вăрçă пынă условисенче пирĕн çитĕнӳсем чылай енчен миллионшар совет хĕрарăмĕсен ĕçĕнчен килнине парти организацийĕсен яланах асра тытас пулать.

Хĕрарăм-работницăсем! Икĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлĕр! Фронт валли ытларах танксем, самолетсем, орудисем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, автоматсем, боеприпассем парăр! Арçынсен профессийĕсене вĕренсе алла илĕр! Хăвăр квалификацине хăпартăр, пурнăçпа йăла учрежденийĕсене ытларах пулăшса пырăр, çак ĕçре ытларах пуçарулăх кăтартăр! Столовăйсен, ача-пăча сачĕсен, яслисен, ача çуратмалли çуртсен, мунчасен тата ыттисен ĕçĕсем мĕнле пынине чăн-чăн хуçа пек асăрхаса пырăр! Предприятисенче, обществăллă учрежденисенче тата пурăнмалли çуртсенче санитаришĕн кĕрешĕр!

Чугунçул çинче ĕçлекен хĕрарăмсем! Транспорт кăтартуллă ĕçлессишĕн, çар грузĕсене хăвăртрах та хăвăртрах турттарассишĕн кĕрешĕр, чугунçул транспорчĕн техникине вĕренсе алла илĕр!

Хĕрарăмсем-колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенче ĕçлекен работницăсем! Çитес ялхуçалăх çулĕн ăнăçлăхне эсир татса паратăр! Тыла тата фронта тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç çителĕклĕ тăратасси сирĕн уйхирти ĕçĕртен килет. Çурхи ака кампанине ăнăçлăн ирттерни фронта тунă пысăк çĕнтерӳпе танлашнине асрах тытса тăрăр! Пĕтĕм вăйя, пĕтĕм майсене кăçал лайăх тырпул туса илме мобилизацилĕр!

Хĕрарăмсемпе хĕрсем! Çар специальноçĕсене вĕренсе алла илĕр, сывлăшран тапăннинчен тата химилле тапăннинчен хӳтĕленес ĕçе, санитари ĕçне, сыхăну ĕçне вĕренĕр! Хĕрлĕ Çарăн геройла паттăрĕсемшĕн пĕтĕм вăйран тăрăшăр, суранланнисене ăшшăн пăхас ĕçе кирлĕ пек йĕркелĕр, боецсен ачисемшĕн амăшĕсем пек тимлĕн тăрăшăр.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партин Центральнăй Комитечĕ çакна çирĕппĕн шанса тăрать: Совет Союзĕнчи ĕççынни хĕрарăмĕсем хăйсен пĕтĕм творчествăллă вăйне, хăйсен пĕтĕм вăй-хăватне хамăр тăван çĕршывăн çар хăватне татах та ытларах çирĕплетнĕ çĕре мобилизацилĕç, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пуçĕпех пĕтерсе тăкассишĕн пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле кĕрешĕç.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Укерчĕк çинче: Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче кĕрешекен хĕрарăмсем (сулахайран): санитарнăй инструктор-орденоносец Анастасия Суховарова, вăл çăпăçу хирĕнчен аманнă боецсене 41 çынна илсе тухнă; санитарнăй самолет пилочĕ, старши лейтенант Полина Седова, Командованин заданийĕсене отлично пурнăçласа пырать; медсестра-орденоносец Е. Ершова, Н-ски чаçа тăшманăн тылĕнче разведка тума питех те паха пулăшу панă; шофер Мария Павлова; старши военфельдшер-орденоносец Ирина Комарова; 3-мĕш рангри военврач-орденоносец Е. Былинина; Н-ски чаçри телеграфистка-орденоносец О. Максимович.

ТАСС фотохроники.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Е. И. Чайкина юлташа Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Тăшманăн тылĕнче нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан партизанла кĕрешӳре хăюлăхпа геройлăх кăтартнăшăн Елизавета Ивановна **Чайкинăна, Ленин орденĕ** тата **«Золотая Звезда»** медалĕ парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти мартăн 6-мĕш.

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери Коммунистла Кунне Шупашкарта уявлани

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунне уявланă май хулари партипе совет, комсомолпа профсоюз организацийĕсен, хулари хĕрарăмсен активĕпе пĕрле, чаплă лару пулса иртрĕ.

Чаплă ларăва ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ М. Романова юлташ уçрĕ.

Чаплă ларăвăн хисеплĕ президиумне пысăк хавхаланупа Сталин юлташ ертсе пыракан ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Политбюро составне суйларĕç.

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери Коммунистла Кунĕ çинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. Андреева юлташ доклад туса пачĕ. Андреева юлташ хăйĕн докладĕнче пирĕн çĕршыври совет хĕрарăмĕсем тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн, унăн телейĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте, арçынсемпе пĕрлех, нихăçан пулман паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса кĕрешни çинчен каларĕ.

Совет çĕршывĕнчи хĕрарăмсемпе пĕрлех Чăваш республикинчи хĕрарăмсем те фронтра та, тылра та геройла ĕçсем туни çинчен каласа, Андреева юлташ Чăваш республикинчи хĕрарăмсене фронтпа тăван çĕршыва пулăшассишĕн татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕнчĕ.

Чаплă лару хамăрăн аслă çулпуç, полководец Сталин юлташ патне саламлă çыру яма пысăк хавхаланупа, тăвăллăн алă çупса йышăнчĕ.

Лару хыççăн концерт пулса иртрĕ.

Мартăн 15-мĕшĕ— комсомолецсемпе çамрăксен ялхуçалăх машинисен пайĕсене пухмалли воскресникĕ

Трактор тата ытти ялхуçалăх машинисене юсанă çĕрте кирлĕ пайĕсене, инструментсене, металсене пухас тĕлĕшпе ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ мартăн 15-мĕшĕнче комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне туса ирттерме йышăннă.

Воскреснике предприятисенчи, учрежденисенчи, колхозсенчи, МТС-сенчи çамрăксем тата шкул ачисем хутшăнаççĕ.

Комсомол организацийĕсен кашни çамрăк рабочие, колхозника, служащие тата вĕренекене воскресник пуласси çинчен пĕлтермелле. Кам ăçта ĕçлессине малтанах палăртса хумалла. Воскреснике кăтартуллăн ирттерсе ялхуçалăх машинисене юсанă çĕрте кирлĕ пайĕсене ытларах пухма тăрăшăр.

Вăрçă вăхăтĕнчи налога тӳлесе татнă

ЕТĔРНЕ. Чурпай ялсоветĕнчи колхозниксем вăрçă вăхăтĕнчи налога вăхăтра тӳлесе фронта пулăшаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи налога тӳлес ĕç уйрăмăнах Чурпайри Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хушшинче аван пулса пырать. Ку колхозри колхозниксем нумайĕшĕ вăрçă вăхăтĕнчи налога срокчен тӳлесе татрĕç. Сăмахран, Казанбаев, Воробьев, Тимофеев, Скворцов, Данилова, Блинова колхозниксен çемьисем извещенисене алла иличченех вăрçă вăхăтĕнчи налог укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç. Колхозра колхозниксемпе единоличниксем 54 çын вăрçă вăхăтĕнчи налог укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

М. ДАНГЕР.

* * *

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Анат Тăрмăшра финагент пулса ĕçлекен Н. Ершов юлташ Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле вăрçă вăхăтĕнчи налог укçине 50 процент пухма пулчĕ. Г. Пятков, Т. Ефимова, Н. Раевский колхозниксем вăрçă вăхăтĕнчи налога пĕтĕмпех парса татрĕç. Халĕ ялсовечĕпе 25 пин тенкĕ укçа пуçтарнă та ĕнтĕ. Ку ĕçре финагента активпа таччăн çыхăнса ĕçлени нумай пулăшать.

И. МИТРОФАНОВ.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем 1942 çулти февралĕн 6-мĕшпе мартăн 5-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Февралĕн 6-мĕшпе мартăн 5-мĕш хушшинче Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем противникран çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—43, орудисем—285, минометсем—83, пулеметсем—491, автоматсем—236, винтовкăсем—3.804, самолетсем—28, планерсем—4, автомашинăсем—794, мотоциклсемпе велосипедсем—189, велосипедсем тиенĕ пĕр вагон, тракторсемпе тягачсем—13, лавсемпе çунасем—653, лашасем—1.112, рацисем—6, йĕнерсем—153, пралуксем—50 тонна; бензин тултарнă пичкесем—13.361, бронеплощадкăсем—2, артиллери снарячĕсем—10.400, снарядсем хунă 249 ещĕк тата снарядсем хунă 2 склад (вĕсенчи снарядсен хисепне шутласа тухман-ха), снарядсем тиенĕ 160 вагон, минăсем—4.166, минăсем хунă 113 ещĕк, гранатăсем—2.915, гранатăсем хунă 14 ещĕк, патронсем—991 пин тата патронсем хунă 35 ещĕк, авиабомбăсем—10 вагон тата авиабомбăсем усрамалли склад (унти бомбăсен хисепне шутласа тухман-ха), снарядсен гильзисем—7.090, паровозсем—16, вагонсем—599.

Çак вăхăт хушшинче Хĕвеланăç фрончĕн районĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 40.000 çынран кая мар вилнĕ.

Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем халăх пурăнакан 263 пункта, çав шутрах СУХИНИЧИ, ЮХНОВ тата ДОРОГОБУЖ хулисене противникран ирĕке кăларнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 6-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 6-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противникăн контратакисене сире-сире пăрахса, малалла куçса пынă тата фронтăн хăшпĕр участокĕсенче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Мартăн 5-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата противникăн аэродромĕсенче нимĕçсен 79 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 14 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 5-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 10 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 400 ытла автомашинăна, боеприпассем тиенĕ 135 лава, горючи тултарнă 13 автоцистернăна тата чугунçул çинчи 2 цистернăна, 38 орудине, зенитнăй пулеметсен 13 точкине, боеприпассен 6 складне, чугунçул çинчи 35 вагонпа паровоза пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, ангара çĕмĕрсе тăкнă, противникăн пехотине 4 батальон ытла сапаласа янă тата пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, вăйлăн хирĕç тăракан противника хĕссе пырса, халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ. Çапăçу вăхăтĕнче противникăн 13 танкне çĕмĕрнĕ тата унăн пехотин икĕ батальонне аркатса тăкнă. Хăйĕн çухалнă позицийĕсене каялла тавăрас тесе, противник çапăçăва пехота кĕртсе ярса тата ăна танксемпе пулăшса пырса, темиçе хутчен те хаяр контратакăсем тунă. Анчах та противникăн çав контратакисем ăнăçлă пулман. Тăшмана пысăк çухатусем тӳстерсе унăн контратакисене пурне те сирсе пăрахнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противникăн çирĕплетнĕ вырăнне татса кĕрсе, халăх пурăнакан 4 пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсенне 3 оруди, 16 пулемет, 11 миномет, 36 автомашина тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем нумай тытса илнĕ. Çав çапăçу вăхăтĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. 15 нимĕçе тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем «СС» бригадин кавалери полкĕнчи эскадрона çапса салатнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын вилнĕ.

* * *

Тăшман пулеметран вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, старши политрук П. И. Митрофанов ертсе пыракан гвардеец-разведчиксен ушкăнĕ К. ялне пырса кĕнĕ те, урамсенче хаяррăн çапăçнă хыççăн çав яла йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Пирĕн боецсем противникăн боеприпассем тиенĕ 15 автомашинине тата горючи усракан пысăк складне тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн 18 боец, старши сержант Орлов юлташ ертсе пынипе (Калинин фрончĕ). нимĕçсене халăх пурăнакан Б. пунктри пĕр çирĕплетнĕ çуртран кăларса сирпĕтнĕ. Гитлеровецсем хăйсене оборона тумашкăн питĕ те кирлĕ çав позицине епле те пулсан каялла тавăрас тесе, пирĕн боецсене хирĕç хăйсен 150 çынран тăракан отрядне кĕртсе янă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Нимĕçсене тӳрех пере-пере ӳкерсе тата гранатăсемпе усă курса, красноармеецсем çак танмар çапăçăва темиçе сехет хушши туса пынă. Нимĕçсем çав çапăçура хăйсем çĕнтерӳ тăватпăрах тесе ĕмĕтленнĕ. Çав вăхăтра Кругликов юлташ ертсе пыракан пирĕн боецсен ушкăнĕ пырса çитнĕ. Кĕске вăхăт хушши пулса иртнĕ çапăçура пур гитлеровецсене те вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнче кĕрешекен партизансен «Бей врага» ятлă отрячĕ К. ялĕнче вырнаçнă нимĕçсен гарнизонĕ çине çĕрле пырса тапăннă. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем 30 салтак ытла çухатса çав ялтан чакнă. Тепĕр отрядри партизансем карательнăй отряд çине атака туса 17 эсэсовеца вĕлернĕ, 4 пулемет тата 7 автомат тытса илнĕ.

* * *

Белофинсем оккупациленĕ ялсенчен пĕринчи комендатурăра партизансем комендант Вейно Сааринен хăйĕн тăванĕсем патне çырнă çырăва тытса илнĕ. Çырура çапла каланă: «Пурнăç йăлăхтарса çитерчĕ. Пуринчен ытларах партизансем хăрушă. Ĕнер вĕсем пирĕн складсене вут тивертсе ячĕç те тарса пытанчĕç. Пирĕн юлашки продовольстви пĕтрĕ».

* * *

Пирĕн чаçсем нимĕçсен 52-мĕш пехотнăй полкĕн 2-мĕш батальонĕнчи 6-мĕш рота командирĕн донесенине тытса илнĕ. Рота командирĕ полк штабне унăн подразделенийĕнче юлашки çапăçусем вăхăтĕнче хĕçпăшал мĕн чухлĕ пĕтни çинчен тата мĕнле хĕçпăшал пĕтни çинчен çырса пĕлтерет. 6-мĕш ротăн: 91 штык, 20 винтовка, танка хирĕç пемелли 3 пăшал, 44 пистолет, 10 автомат, «МГ-34» йышши 9 пулемет, «МГ-34» йышши лафетлă 2 пулемет, 3 çăмăл миномет, 94 противогаз пĕтнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Тăшманăн каялла чакма тивет. Тискерленсе çитнĕ гитлеровецсем каялла чакнă чух совет ялĕсемпе хулисенчи мирлĕ халăха пĕтереççĕ. Ленинград облаçĕнчи Охват поселокĕнче гитлеровецсем, персе вĕлерессипе хăратса, поселокри стариксемпе хĕрарăмсене вăйпах çунасем çине лартнă та минăсем хурса тухнă çул тăрăх янă. Взрывсем пулнипе поселокра пурăнакан нумай çынсем пĕтнĕ.

* * *

«Забайкалзолото» тресчĕн Кий рудникĕнчи коллектив ăнăçлăн ĕçлет. Бурщик Михаил Федотов çак кунсенче хăйĕн нормине 647 процент тултарнă, унăн ученикĕ Георгий Решетников задание 523 процент пурнăçланă. Ылттăн тупас тĕлĕшпе кварталти плана рудник срокченех тултарнă.

Мартăн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Линев капитанăн подразделенийĕ (Хĕвеланăç фрончĕ) пĕр кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 350 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче нимĕçсем Мартиросян юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн чаçăн позицине хирĕç контратака пуçласа янă. Совет боецĕсем гитлеровецсене çывăха ярса тăвăллăн пеме пуçланă. Противник, çапăçу хирĕнче хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен çĕршер виллисене пăрахса хăварса, каялла чакнă.

* * *

Григорьев юлташăн подразделенийĕнчи боецсем (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) халăх пурăнакан Т. пунктшăн пынă çапăçура, противникăн контратакисене сире-сире пăрахса, гитлеровецсене 250 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Ку çапăçура Погребников юлташăн оруди расчечĕ уйрăмах палăрнă. Пирĕн артиллеристсем нимĕç миномечĕсен батарейине пусарса лартнă тата 2 станковăй пулемета пĕтерсе тăкнă.

* * *

Анашкин юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсен подразделенийĕ (Хĕвеланăç фрончĕ) пĕр кун хушшинчи çапăçусенче тăшман пулемечĕсен 9 точкине пĕтерсе тăкнă, горючи складне сирпĕнтернĕ, противник пехотин ротине сапаласа янă.

* * *

Юлашки вунă кун хушшинче Ф. юлташ командир пулса тăракан партизансен отрячĕ, Смоленск облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, нимĕçсен А. ялне вырнаçнă чаçĕ çине кĕтмен çĕртен çĕрле пырса тапăннă. Партизансем тăшманăн 8 салтакне пĕтерсе тăкнă, нимĕçсенне 12 винтовка тата 2.200 патрон тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 258-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 458-мĕш полкĕн 6-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Курт Вилле çапла каласа панă: «Пирĕн полк Наро-Фоминск патĕнче пулса иртнĕ çапăçусенчех питĕ пысăк çухатусем тӳсрĕ. Çапăçу пуçланас умĕн 6-мĕш ротăра 180 салтак пулнă. Вĕсенчен халĕ пысăк пайĕ вилсе пĕтнĕ. Çапăçу пынă вăхăтра ротăна 2 хутчен çĕнĕ çынсем хушса панă. Малтанхи хутĕнче пирĕн ротăна 75 салтак, иккĕмĕш хутĕнче 90 салтак хушса пачĕç. Халĕ ротăра 30

Вĕçĕ 4-мĕш страницăра

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери Коммунистла Кунĕ

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери Коммунистла Кунне Совет Союзĕнчи ĕçсынннисем кăçалхи çул отечественнăй аслă вăрçă условийĕсенче кĕтсе илеççĕ. Совет халăхĕ Германин урса кайнă фашизмне хирĕç пĕтĕм вăй-хăвачĕпе тăрса паттăррăн çапăçать. Совет государстви, Ленин пĕтĕçтерсе тунă тата Сталин пăхса çитĕнтернĕ Хĕрлĕ Çар çак хаяр испытание чыслăн тӳссе ирттерчĕç.

Вăрçă пуçланнăранпа саккăр уйăх иртнĕ хыççăн Гитлерăн çаратуçă-çарĕ юн юхтарса хавшаса пырать, эпир захватчиксене хирĕç тăрасси тата пирĕн вăйсем кунран-кун ытларах ӳссе пыраççĕ. Гитлерăн йыткĕтĕвĕсене активлă оборона, талхăрĕнче хавшатса çитерсе, Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем иртнĕ çулти декабрĕн малтанхи кунĕсенче контрнаступлени тума тытăнчĕç, захватчиксене умлă-хыçлăнах хăватлăн пыра-пыра çапрĕç тата çапаççĕ те, фашистсен çарне пĕр чарăнмасăр хĕвеланăçнелле хăвалаççĕ.

Фашистла тискер кайăк ирĕклĕ совет хĕрарăмĕсене хăрушă та ирсĕр чуралăха тавăрасшăн. Хĕрарăмăн Гитлертан тискертерех тăшман урăх çук. Гитлеризм хĕрарăма нимĕнле право та пама тивĕçлĕ тесе шутламасть. Хĕрарăмсемпе хĕрсене начар йышши чĕрчунсен вырăнне хурса, фашистла тискер кайăксем вĕсенчен ача çуратмалли машинăсем туса хурасшăн.

Фашистсен «философĕ» Розенберг хăйĕн «XX-мĕш ĕмĕрти миф» ятлă кĕнекинче хĕрарăма пурнăçра çакнашкал вырăн парать: «Хĕрарăм обществăра пăхăнса тăмалли вырăн йышăнма тивĕçлĕ, вĕсен тарçăсем, кил-çуртри чурасем пулмалла», — тет.

Фашистсем сыснасене ĕрчетмелли майсемпе чăн-чăн «ариецсене» ĕрчетнĕ çĕрте усă кураççĕ. Çĕрĕç министрĕ Дарре «Нимĕç халăхне ĕрчетес проблема» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă. Çапла фашистсем хĕрарăмăн ача амăшĕ пулас телейне выльăх картишĕн йĕркисемпе улăштараççĕ.

Этемлĕх хăйĕн аталанăвĕн нумай ĕмĕрхи çулĕ çинче ача амăшĕн таса та çӳллĕ кăмăллă сăнарне упраса пынă. Историн чи тĕксĕм тапхăрĕсенче те этемлĕх ача амăшне тасан та тимлĕн пăхса усранă. Гитлеризм ача амăшĕн пархатарлă тивĕçлĕхĕнчен ирсĕррĕн мăшкăллать. Фашистсем ачасене хăйсен амăшĕсен куç умĕнчех вĕлереççĕ, вĕсем йывăр çын-хĕрарăмсенне хырăмĕсене касса çураççĕ, ачасене кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмсенне кăкăрĕсене касаççĕ.

Фашистла Германире гитлеровецсем ача амăшĕнчен этем ами, ача çуратмалли машина туса хурасшăн. Çак ирсĕр йĕркене хирĕç ача амăшĕ хăйĕн çутçанталăк панă мĕнпур тивĕçлĕхĕпе тарăхса çĕкленет.

Пирĕн совет çĕршывĕнчи ача амăшĕ пăхах та урăх пурнăçпа пурăнать. Совет геройне чура мар, этем ами мар, ирĕклĕ те пысăк кăмăллă, таса чунчĕреллĕ ача амăшĕ пăхса çитĕнтерчĕ. Вăл хăйĕн ывăлне тăван çĕршывшăн — хамăрăн синемĕршĕн кĕрешме ыррăсывлăх сунса пехиллет.

Серго хулинчи Марфа Никифоровна Заболотная действующи çартн хăйĕн ывăлĕ патне çапла çырнă: «Эпĕ сана хамăрăн тăван çĕршывăн хаярлăхĕ ячĕпе пехиллетĕп», — тенĕ.

Совет Союз геройĕн Зоя Космодемьянскаян, нимĕç палачĕсем асаплантарса вĕлернĕскерĕн, амăшĕ çапла калать: «Манăн чĕре питех те хытă суранланчĕ, вăхăт иртĕ, çав сурана часах ӳт илеймĕ, анчах эпĕ хамăн юратнă хĕрĕм аслă ĕçе хутшăннăшăн тата хăйĕн юлашки сывлăшĕ тухиччен вăл çирĕп те хăватлă, тӳрĕ те пысăк кăмăллă пулниншĕн хĕпĕртесе мухтанатăп»,—тет.

Амăшĕ хăйĕн юратнă ывăл-хĕрĕпе кĕрешӳри мĕнпур йывăрлăхсемпе хăрушлăхсене пĕрле тӳссе ирттерет. Хăйсен арăшĕрĕсемпе, тăванĕсемпе тата ывăлĕсемпе пĕрле гитлерла ирсĕрсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленнĕ хĕрарăмсем — çулăмлă совет патриочĕсен амăшĕсем пирĕн çĕршывра миллионшарăн шутланаççĕ, вĕсем фашизмпа унăн ухмахла йĕркине, ача амăшĕн пархатарлă кăмăл-туйăмĕнчен ирсĕррĕн мăшкăллакан йĕркине пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ.

Совет стройĕ социализмлă тăван çĕршыва чĕререн парăннă çĕнĕ хĕрарăма пăхса çитĕнтерчĕ. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче, хаяр испытани тӳсмелли кунсенче, вырăс хĕрарăмĕн геройла сăн-сăпачĕ, унăн ашшĕн е мăшăрĕпе тăванĕн сăн-сăпачĕ пекех, халиччен нихăçан пулман вăй-хăватпа çĕкленчĕ.

Пирĕн куç умне 1854—55 çулсенчи Севастополь оборонин героини пулнă медицина сестрин Даша Севастопольскаян сăн-сăпачĕ тухса тăрать. Истори вырăссен паттăр хĕрарăмĕн — Смоленск губернийĕнчи партизанкăн Василиса Кожинăн ятне пархатарлăн сыхласа усрать. 1812 çулта çав партизанка Наполеонăн Российăран мухтавсăр тарнă çарĕн тылĕнче тăшмана сахал мар инкексем кӳнĕ. Совет хĕрарăмĕ граждан вăрçинчи героиньăсен — пĕрремĕш утлă çарăн геройла походĕсенче пулнă Зинаида Патрикеевăн ятне, Кабардино-Балкари партизанкин Жузек Ольмезовăн ятне, контрразведка подвалĕнче тискер кайăкла асаплантарса вĕлернĕ подпольщицăн Дора Любарскаян ятне ыйăх пĕлсе тăрать.

Пирĕн çĕршыв Валентина Гризодубова, Марина Раскова, Зоя Космодемьянская тата ытти çавăн пек паттăр героиньăсене пăхса çитĕнтерниĕ пирĕн çĕршыв халăхи вăхăтра тăшмана хирĕç Василиса пек героиньăсене мĕн чухлĕ кăларса тăратма пултарать! Хăюллă партизанка Елизавета Чайкина, Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулнăскер, тата кĕрешӳри хăюлăхпа паттăрлăхшăн мартăн 8-мĕш тĕлне орденсемпе медальсем парса наградăланă 73 хĕрарăм мĕнпур совет хĕрарăмĕсен чапне татах та ытларах çĕклеççĕ.

Пирĕн хĕрарăмсене, хамăрăн мĕнпур совет халăхне пăхса çитĕнтернĕ пекех, Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ пăхса çитĕнтернĕ; вĕсем кĕрешӳре хăрама пĕлмеççĕ, вĕсем хăйсен тăшманĕсене мĕнпур хаярлăхпа курайманççĕ кăна мар, вĕсем тăшмансене хирĕç халиччен пулман геройлăхпа, паттăрлăхпа тăрса хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр кĕрешме пĕлеççĕ.

«Çавнашкал хĕрарăмсем халиччен пулман тата вĕсем ĕлĕкхи саманара пулма та пултарайман», — тенĕ Сталин юлташ пирĕн çĕршыври хĕрарăмсем çинчен.

Совет хĕрарăмĕ-партизанка тăван совет çĕршывне алла хĕçпăшал тытса хӳтĕлет. Хĕрлĕ ялав орденĕпе наградăланă мухтавлă партизанкăн Катя Абрамовăн, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă партизанкăн Валентина Герасимовăн, «За отвагу» медальсемпе наградăланă Гузманăн, Шубенокăн ячĕсене пĕтĕм çĕршыв пĕлет. Чаплă сандружинница Клава Павлова тунă паттăр ĕçсем пуриншĕн те паллă пулса тăраççĕ. Унăн ĕçне Совет Союзĕн маршалĕ Ворошилов юлташ мухтанă.

Колхоз председателĕ Ирина Т. ертсе пыракан «Тавăракансен отрячĕ» ятлă партизанла отряд çинчен пурте пĕлеççĕ. Пĕррехинче çав отряд яла систермесĕр пырса кĕнĕ те пĕр пӳртре вырнаçнă нимĕç офицерĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. Тепринче партизанкăсем, шоссе çулĕ çинче засада туса, фашистсен пысăк ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек героиньăсем çĕршерĕн те пиншерĕн шутланаççĕ.

Пирĕн партипе совет правительстви чĕнсенех, Совет Союзĕнчи халăхсен ывăл-хĕрĕсемпе пĕрлех, пирĕн чăваш халăхĕн ывăл-хĕрĕсем те фронта тухса кайрĕç. Вĕсем хушшинче вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах действующи çарăн малти позицийĕнче пыракан Истифеева, врач Ермошкина, Ясницкая тата ытти юлташсем те пур. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех фронта хăйсен ирĕкĕпе комсомолка-физкультурницăсем Рузанкина, Марышкина, София Иванова, Юлия Числова юлташсем тухса кайрĕç. Вĕсемпе пĕрлех ик-виç ачаллă хĕрарăмсем те — Федорова, Гайкина медсестрасем те фронта кайрĕç. «Манăн упăшка военнообязаннăй мар, мĕншĕнха эпĕ упăшкана ачасемпе хăварса фронта кайма пултараймастăп», — терĕ Федорова юлташ. Вăл çапла турĕ те.

Фабрикăсемпе заводсенче, транспортра колхозсемпе совхозсенче ĕç хĕрарăмĕсем сложнăй квалификацисемпе профессисене вĕренсе алла илессишĕн, ĕç тухăçлăхне татах та ытларах ӳстерсе тăван çĕршыва нумайрах продукци парассишĕн тăрăшаççĕ.

Халиччен нихăш енчен те палăрса тăман çынсем, çулпуçăн ăслă кăтартăвĕсемпе хавхаланнăскерсем, халăхи вăхăтра ĕçри паттăрлăхăн тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Чăваш республикинчи предприятисенче ĕçлекен хĕрарăмсен йышĕ вăрçă пуçланнăранпа чылай ӳсрĕ: вагонсем юсакан заводра работницăсен йышĕ 1,5 ытла, Шупашкарти кирпĕч заводĕнче икĕ хут ытла, Сĕнтĕрвăрри спиртзаводĕнче икĕ хута яхăн ӳсрĕ. Чăваш республикинчи промышленноçра ĕçлекен хĕрарăмсен йышĕ 40 процентран иртет. Трактористкăсен йышĕ 304 çынран 475 çынна çити ӳсрĕ. Кунсăр пуçне халăхи вăхăтра татах 700 хĕрарăм трактористсен курсĕсенче вĕренеççĕ.

Хĕрарăмсем çĕнĕ профессисене вĕренсе алла илеççĕ. Çапла, сăмахран, чăваш хĕрарăмĕ Иванова юлташ, кăçалхи кăрлачăн 6-мĕшĕнче завода ĕçлеме кĕрсе, пĕр уйăх вĕçленнĕ тĕле çĕнĕ профессие вĕренсе алла илчĕ те халĕ нормăна 110-шар процент тултарса пырать. Çавăн пекех Данилова юлташ та нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлет. Володьянов ячĕпе тăракан кожкомбинатри работница-комсомолкăсем Жуковăпа Агеева юлташсем, çĕнĕ машинăсемпе ĕçлеме вĕренсе çитсе, нормăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Пысăк хавхаланупа çулăмланнă патриоткăсем—22 килхуçи хĕрарăмĕ—Улатăр станцинчи депона пынă та хăйсем арçын профессине вĕренсе алла илме ĕмĕтленни çинчен пĕлтернĕ. Вĕсенчен пĕри те халиччен алла слесарь инструменчĕсем тытса курман. Халĕ вĕсем çав инструментсемпе лайăх усă курма пултараççĕ, çĕнĕ профессисене ăнăçлăн вĕренсе пыраççĕ. Двухсотницăсемпе трехсотницăсен йышĕ кунран кун ӳссе пырать (вĕсен шутĕнче Шупашкар типографийĕнчи переплетчицăсем Андреевăпа Елизарова, Улатăр завочĕсенчи работницăсем — Царева слесарь, Козлова токарь, Канашри вагонсем юсакан заводри Калашникова токарь тата ытти сем те нумай).

Чăваш республикинчи хĕрарăмсем (работницăсемпе колхозницăсем тата килхуçи хĕрарăмĕсем) тĕрлĕ строительствăсенче вăйсене хĕрхенмесĕр ĕçлерĕç, кулленхи нормăсене 250-рен пуçласа 480 процента çити тултарса пычĕç. Ку енĕпе уйрăмăнах Сĕнтĕр районĕнчи колхозницăна Хозикова юлташа, Чкаловски районри колхозницăна Шарафутдинова юлташа, Тăвай районĕнчи Фекла Григорьева юлташа палăртмалла. Хĕрарăмсенчен чи хастаррисене Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Çапла, Хозикова юлташ—Ленин орденĕ, Шарафутдинова юлташ Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ, учительница Кучкасова юлташ — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илме тивĕçлĕ пулчĕç. Чăваш республикинчи мухтавлă патриоткăсене юлашки вăхăтра орденсемпе медальсем парса пĕтĕмпе — 14 хĕрарăма наградăланă.

Стахановла ĕçĕн пахa тĕслĕхĕсене пирĕн трактористкăсем кăтартса параççĕ. Çапла, сăмахран, Ишлей МТС-че ĕçлекен Астраханцева трактористка тракторпа ĕçлемелли çулталăкри плана 220 процент, Чкаловски МТС-ра ĕçлекен Халлиулина трактористка плана 153 процент тултарнă.

Пионер совет патриоткисем ылханлă тăшмансене, нимĕç оккупанчĕсене пуçĕпех çапса аркатма мĕн кирлине фронта, Хĕрлĕ Çара пурне те туса парассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Пирĕн Чăваш республикинче правительство наградисемпе — 43 хĕрарăма, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисемпе 238 хĕрарăма наградăланă. Чăваш республикинчи хĕрарăмсем хушшинчен 20 çын РСФСР-ăн тата Чăваш республикин тава тивĕçлĕ деятелĕсем пулса тăраççĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн ĕнер пичетленсе тухнă Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсене, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче аманнăскерсене, сыватас тĕлĕшпе хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр ĕçленĕшĕн госпиталь работникĕсенчен 24 хĕрарăма хисеплĕ грамотăсемпе наградăланă. Вĕсем хушшинче аманнă красноармеецсем умĕнче пысăк авторитетпа усă куракан Рябушкина, медицина наукисен кандидачĕ Фадеева юлташсем пек хастар врачсем пур. Прокопьева пек сестрасем, шеф-повар Малинич пек, санитарка Муромцева пек, Винокурова, Чарыкова, Смирнова пек хастар активисткăсем пур.

ССР Союзĕнчи хĕрарăмсем çĕршывăн обществăллă тата политикăллă пурнăçне арçынсемпе пĕр танах хутшăнаççĕ. Совет хĕрарăмĕсен политикăллă пысăк активлăхне Совет влаçĕн органĕсене хĕрарăмсенчен йышлăн суйлани те авантах кăтартса парать. ССР Союзĕн Верховный Совечĕн депутачĕсем хушшинче — 227 хĕрарăм, Союзлă республикăсен тата автономиллĕ республикăсен Верховный Совечĕсен депутачĕсем хушшинче — 1504 хĕрарăм шутланать. Вырăнти советсене 456.759 хĕрарăма суйланă.

Чăваш республикинчи вырăнти советсене — 3.090 хĕрарăма, Чăваш АССР Верховный Советне — 26 хĕрарăма суйланă. Чăваш республикинчи район совет исполкомĕсен председателĕсемпе заместителĕсем тата секретарĕсем пулса хĕрарăмсенчен 9 çын ĕçлет. Ялсовечĕсен председателĕсемпе заместителĕсем тата секретарĕсем пулса — 321 хĕрарăм, хула совет исполкомĕсен секретарĕсем пулса — 5 хĕрарăм тата поселок совечĕсен секретарĕсем пулса 5 хĕрарăм ĕçлет.

Чăваш республикинчи хĕрарăмсенчен республикăри ертсе пыракан ответлă вырăнсенче ĕçлекенсем пур. Çапла, сăмахран, РСФСР Верховный Совет депутачĕ Калинкина юлташ апат-çимĕç промышленность халăх комиссарĕ пулса, Чăваш АССР Верховный Совет депутачĕ Меценатова юлташ социальнăй обеспечени халăх комиссарĕ пулса, Кудряшова юлташ — Чăваш АССР Коммунальнăй хуçалăх халăх комиссарĕн заместителĕ пулса ĕçлеççĕ.

СССР Конституцийĕн 122-мĕш статьинче çапла çырнă: «ССР Союзĕнче хуçалăх, государство тата культурăллă, обществăллă-политикăллă пурнăçăн пур облаçĕсенче те хĕрарăма арçынпа танах правăсем параççĕ».

Социализмлă строительствăн пур отраслĕсенче те тимлĕн ĕçлесе, совет хĕрарăмĕсем Сталинла Конституцие çырса хунă правăсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Совет хĕрарăмĕсем, вăл шутрах Чăваш АССР-чи хĕрарăмсем те, отечественнăй вăрçă кунĕсенче хăйсен прависемшĕн кĕрешеççĕ, цехсенче, станоксем патĕнче, колхозсенче тăрăшса ĕçлеççĕ, фронта вăл мĕн ыйтнине пĕтĕмпех туса пама тăрăшаççĕ.

Эпир, совет хĕрарăмĕсем, хамăр тăван çĕршыва юратнине тата тăшмана курайманнине, хамăрăн патриотизма промышленноçра паттăррăн ĕçленипе, ялхуçалăхĕнче тата транспортра пурнăçа шеллемесĕр ĕçленипе, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли юн панипе кăтартса паратпăр. Çав патриотизма партизанкăсем, сандружинницăсем тата медсестрасем фронтра геройла ĕçсем тунипе кăтартса параççĕ.

Совет хĕрарăмĕ нихăçан та чура пулас çук. Хĕрарăмран мăшкăллакан, ăна асаплантаракан фашистла ирсĕрсем тивĕçлине туянĕç.

Совет халăхĕ Германи фашизмне хирĕç туса пыракан кĕрешĕве аслă стратег, вăрçă ĕçне питех те лайăх пĕлсе туса пыракан Сталин юлташ ертсе пынине эпир пĕлетпĕр, çавăнпа та эпир хамăр çĕнтересси шанса тăратпăр. Пирĕн халăхăн юнне юхтарнăшăн эпир тăшмана тивĕçлипех тавăрăпăр, çак паттăр кĕрешӳре совет хĕрарăмĕн активлăхĕ пысăк вырăн йышăнса тăрĕ.

Çĕнтерес кăмăл çавтери вăйлă пулни, тĕллеве пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çине тăрса кĕрешни тăшмана тапăклăнах çĕнтерме пире лайăх майсем туса парĕ.

Чăваш республикинчи хĕрарăмсем, Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче кĕрешсе çĕнĕ çĕнтерӳсем патне — малалла!

З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ.

Героиньăсем

Гвардеецсем пире хăйсемпе пĕрле Киевран пынă хĕрсем çинчен кала-кала пачĕç. 70 хĕр-çамрăк энтузиасткăсем, Студентка-медичкăсем, ветеринари институтĕнче вĕренекен студенткăсем, тĕрлĕ учрежденисенче ĕçлекен ăшă кăмăллă хĕрсем. Вĕсем дивизипе пĕрле вутта та шыва та кĕнĕ. Нимĕнле хăрушлăха пăхмасăр, вĕсем чи йывăр, чи хăрушă самантсенче те суранланнă боецсене пулăшу парса пынă. Хĕрсем вуншар, çĕршер боецсене вилĕмрен çăлнă. Тăшман пульлисем çуса тăнине пăхмасăр вĕсем боецсен суранĕсене сыхнă, тăнĕсене çухатнă боецсене вăрçă хирĕнчен лăпкăрах çĕрелле иле-иле тухнă. Хĕрсем паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Вĕсем вилĕмрен хăраман, тăван çĕршывшăн пулсан, вĕсемшĕн хăйсен пурнăçĕ те шел мар. Çакăн пек вĕсем пур çĕрте те. Пĕр шартлама сивĕ кун эпир вĕсенчен пĕрне çапăçу пулса иртнĕ высота патĕнчен анакан çул çинче тĕл пултăмăр. Вăл суранланнă боеца çавăтса килет. Çап-çамрăк йĕкĕт пуçласа çапăçура пулнă. Ун пичĕ-куçĕ чĕп-чĕрĕ юн. Çамрăк хĕрача мĕн вăй çитнĕ таран ăна лăплантарать:

— Нимех те мар, сурану çăмăл, çавтери çăмăл. Чăт! Санитари пунктне çитме те инçе юлмарĕ ĕнтĕ. Ан парăн, çирĕпрех пус урусемпе, çирĕпрех!

Çамрăк боецăн пичĕ тăрăх юн юхать, кĕрст те кĕрст пăшал сасси илтĕнсе тăрать. Çамрăк боец ĕнтĕ хăрамн пулать. Йăлатса калаçакан хĕрĕн янравлă сасси ăна çĕклентерет, вăл ĕнтĕ хăйĕн суранĕ ыратнине туйми пулать.

Красноармеецсем тăхăнакан гимнастеркăна тăхăнса янă хĕр, ылттăн пек сарă çӳçлĕскер, çапăçу хирĕнчен савăнăçлăн тавăрăнать. Вăл суранланнă боеца хăйĕн пĕчĕк хулĕпе ăшшăн кăна пулăшса пырать. Хĕр суранланнă боеца перевязочнăй пункта илсе çитерет те çавăнтах каялла тавăрăнать. Вăл калама çук илемлĕ, кăмăллă хĕр. Ун пичĕ тăпăл-тăпăл, пĕчĕк ачасенни пек çутăрах-хĕрлĕ тĕслĕ, куçĕсем пĕлĕт пек кăвак. Унта пурнăç савăнăçĕ, çамрăклăх хăвачĕ вĕресе тăрать, пульăсем чуна çӳçентерсе шăхăрнине, минăсем хаярррăн çурăлнине пăхмасăр, пĕр шиксĕр вăл хăйĕн тăван пиччĕш-шăллĕсене вилĕмрен çăлма васкать. Вĕсем валли вăл суран çыхмалли марля çеç илсе пымасть, çук, унта тата ăшă сăмах та, ăшă кăмăл та пур; унта—çĕклентерсе яракан, хавасланттаракан лăпкăлăх тата шанчăклăх.

Пире Раиса Троян çинчен каласа пачĕç, вăл суранланнă 60 боеца вут явăнса çунса тăракан çапăçу хирĕнчен илсе тухнă. Пире санитарка Мухина çинчен каласа пачĕç. Мухина суранланнă темиçе çĕр çынна çапăçу хирĕнчен илсе тухса вилĕмрен çăлса хăварнă. Командира амантсан, Мухина ăна çăлас тесе, нимĕçсен танкĕ çинелле ыткăннă. Командира нимĕçсен танкĕ айĕнчен туртса кăларма тытăннă чухне ăна вĕлернĕ.

Çакнашкал вĕсем, красноармеецсен боевой сестрисем, нимĕнрен хăраман паттăр хĕр тантăшĕсем. Темиçе çĕр, темиçе пин боецсем вĕсене хăйсене вилĕмрен çăлса хăварнăшăн ăшшăн тав тăваççĕ. Кашни кунах тенĕ пек хаçатсем çинче вĕсен паттăрлăхĕ çинчен, хăйсене хăйсем шеллемесĕр ыррă ĕçсем туни çинчен кĕскен заметкăсем çырса кăлараççĕ. Мĕн чухлĕ тата çыранманни!

Санитарка-хĕрсем фронтра темиçе пин. Вĕсен ячĕсене, хăйсене вилĕмрен хăтарнă çынсен ячĕсене красноармеецсемпе командирсем нихăçан та манас çук. Вилнĕ санитарка-хĕрсен ячĕсене совет воинĕсем ĕмĕр-ĕмĕр ăшшăн асăнĕç. Çав героиня-хĕрсене, вĕсем отечественнăй вăрçă пынă кунсенче Хĕрлĕ Çар ретне тăрса, çавтери йывăр пулсан та, геройла ĕçсем тума пултарнăшăн тăван çĕршыв нихăçан та манас çук, нихăçан та манас çук совет халăхĕ.

Связистка-разведчицăсем. Каллех çĕршер, çĕршер те пиншер ятсемпе хушаматсем, каллех паттăрла ĕçсем.

Совет хĕрарăмĕ хамăрăн тăван çĕршыва пĕтĕм чунтан парăннă, уншăн пĕтĕм чунтан тăрăшса кĕрешет. Фронт линийĕ хыçĕнче пулсан, вăл—партизансен отрядĕнче. Фронт линийĕнче пулсан, вăл—санитарка, связистка пулса ĕçлет. Тăван çĕршывăн кирек хăш участокне пăх—пур çĕрте те совет хĕрарăмĕ тăван çĕршывшăн тăрăшса, чунне парса ĕçленине курма пулать. Вăл машинăсемпе станоксем умне, фронта кайнă арçынсем вырăнне тăрса ĕçлет. Вăрçăччĕнхи вăхăтпа танлаштарсан, халĕ вăл вунă хут ытларах вăй хурать. Унăн çавраăнăçуллă ылттăн аллисем фронт валли миллионшар снарядсем, патронсем хатĕрлеççĕ. Завод корпусĕсенче совет хĕрарăмĕ Хĕрлĕ Çар валли çĕнтерӳ туптать.

Куçса килнĕ заводпа пĕрле Украинăран çитнĕ. Çаннисене тавăрса вăл хăвăртрах ĕçе пикеннĕ. Çĕнĕ те йывăр условисенче хĕрарăм завода хăвăртрах ĕçе яма тăрăшнă. Завод пĕр таттисыпписĕр ĕçлетĕр, машинăсем ĕçсĕр ан ларччăр тесе, çĕнĕ те йывăр условисенче хĕрарăм завода хăвăртрах ĕçе тума пулăшнă. Вăл çил-тăмана та, шартлама сивве те пăхман. Вăл хăй çинчен шутламан. Ун шухăшĕ пĕр тĕллевре: тăван çĕршыв çинче пулнă.

Совет хĕрарăмĕ çĕршер километр утнă, вăл нимĕçсем туртса илессине хăратса тăракан районсенчен колхоз кĕтӳне хăваласа тухнă. Хăшпĕр чухне чăтма çук шăрăх тăнă, тусан йăсăрланнă, хăшпĕр чухне вигтĕрен тăкнă пек çумăр çунă, путакан шурлăх тăрăх утма питĕ йывăр пулнă, хĕрарăм ăна та кăна та пăхмасăр, шăрăха та, сивве те туймасăр, çаплах малалла, хĕвелтухăç еннелле утнă—вăл колхоз пурлăхне çăлнă. Çĕнĕ çĕре çитсен, çĕнĕ условисенче çухалса кайман, йĕмен те, куйхăрман та. Çаннисене тавăрнă та ĕçе пикеннĕ.

Вăл хăйĕн ачисене юратать, анчах та вăл çакăнпа пĕрлех тăван çĕршывĕн пур ачисене те чунтан юратать. Вăл партизанка Александра Дрейман пек, кирлĕ пулсан, кĕрешӳри пиччĕш-шăллĕсене вилĕмрен çăлмалла пулсан, хăй ачи валли урлă та каçма хатĕр. Вăл хресчен арăмĕ Вильган пек, хăйĕн саккăр ывăлне Хĕрлĕ Çара ăсатнă Вильган пек, хăйĕнчен тăван ачисене пĕр тумлам куççуль тăкмасăр вăрçа ăсатма пултарать.

Вăл килте тирпейлĕ хуçа, килти ĕçе вăл пурне те тума пултарать, анчах та вăл çĕрулми шуратнипе, яшка пĕçернипе çеç çырлахмасть. Вăл хăйсен заводĕнче—стахановка, хăйсен колхозĕнче—тăрăшса ĕçлекен ударница. Вăл пулемет тытсан пулеметран пеме пултарнине, граната илсен гранатăна тĕл ывăтма пултарнине кăтартрĕ.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче совет хĕрарăмĕ хăйĕн халиччен историре курман-илтмен паттăрлăхне кăтартрĕ. Чăтăмлăхне, хурçă пек çирĕплĕхне, тăван çĕршывне чунтан юратнине, уншăн темĕнле йывăрлăхсем тӳсме те, тем пек асапа чăтма та, хăйĕн пуçне хума та хатĕррине кăтартрĕ.

Нимĕç, пирĕн çĕршыва тапăнса кĕрсе, хăй куçĕпех ĕнтĕ курчĕ—совет хĕрарăмĕ, вăл хуть хăш тĕлте, хуть хăш постра пулсан та, мăшкăлпа чуралăх илсе килекен оккупанта хирĕç мĕн çĕнтеричченех кĕрешме хатĕррине хăйĕн ĕнсипе тӳссе курчĕ.

ВАНДА ВАСИЛЕВСКАЯ.

Колхоз хĕрĕсем хĕрӳ ĕçре

ИШЛЕЙ. Колхозник-ударниксен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съездĕнче, тăхăр çул каярах, Сталин юлташ çапла каланăччĕ: «Колхозсенче хĕрарăмсем — пысăк вăй пулса тăраççĕ. Пирĕн обязанность — колхозсенче хĕрарăмсене малалла ӳстерсе, çав вăя ĕçе кĕртесси пулать».

Большевиксен партийĕ, Сталин юлташ ертсе пынипе, колхозсенче хĕрарăмсене воспитани парас тата вĕсене малалла ӳстерсе пырас тĕлĕшпе питĕ нумай ĕçсем тунă. Çак çулсем хушшинче пултаруллă пиншер те миллионшар колхозницăсем обществăллă ертсе пыракан ĕçе тăчĕç, бригадăсемпе звеносене, выльăх-чĕрлĕх фермисене ертсе пыма тата ытти пысăк ĕçсене те хутшăнма тытăнчĕç.

Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан отечественнăй аслă вăрçă условийĕсенче хĕрарăмсем йышăнса тăракан вырăн татах та пысăкланчĕ. Арçынсем фронта кайрĕç. Хĕрарăмсен тӳпине пысăк ĕçсем юлчĕç.

Колхозлă ялта хĕрарăм тума пултараймаан пĕр ĕç те çук. Вĕсем халĕ Хĕрлĕ Çар ретне кайнă совет гражданĕсен вырăнне тăрса ĕçлеççĕ. Çамрăк хĕрсемпе комсомолкăсем ĕçе тивĕçлипе туса пыраççĕ, вăрçă вăхăчĕ хушнă пек ĕçлеççĕ.

Ярапайкасси ялсоветĕнчи Доронин ячĕпе тăракан колхозри комсомолка А. Пайкова Хĕрлĕ Çар ретне кайнă М. Задонский вырăнĕнче ялсовет секретарĕ пулса ĕçлет, колхозри бригадир З. Павлова — И. Лосманов, конюх К. Пайкова — А. Жирнов юлташ вырăнĕнче ĕçлеççĕ. Е. Васильева, Т. Кобылина, А. Хлебникова, П. Алексеева тата О. Архипова юлташсем темиçе çул хушши фермăсенче ĕçлеççĕ, партипе правительство ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени ĕç тухăçлăхне чылаях хăпартнине вĕсем хăйсемех туяççĕ. Колхозра ĕçлес хастарлăх ӳссех пырать. Иртнĕ çулта вĕсем кашни пĕр ĕнерен 500—600 литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал кашни ĕнерен 950—1000 литр сĕт суса илме пулчĕç. Вĕсем пушă вăхăтсенче авăн çапнă çĕре те хутшăнаççĕ.

«Красная Чувашия» колхозра та хĕрарăмсем ответлă ĕçсенче ĕçлеççĕ. Комсомолка К. Портнова юлташ кунти П. Жуков бригадир Хĕрлĕ Çар ретне кайнăранпах колхоз бригадирĕнче ĕçлет. А. Силова — К. Силов, Е. Николаева — С. Николаев, О. Арсентьева — А. Филиппов юлташсен вырăнĕсенче ĕçлеççĕ. Çуракине хатĕрленнĕ май, ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе К. Портнова комсомолка ертсе пырать. Ăна ĕçре Ярапайкасси туллимар вăтам шкулĕнче 7-мĕш класра вĕренекен К. Алексеев, М. Енисеев пионерсем пулăшаççĕ. Агротехникăн хĕллехи тата çурхи ĕçĕсене ертсе пыма колхозра 5 çынтан комисси тунă. Кашнине уйрăм ĕç панă. Вăрлăхсене сортлас тĕлĕшпе — О. Филиппов, кĕл тата ытти удобренисем пухас енĕпе К. Портнова юлташсем ертсе пыраççĕ. А. Смеловпа П. Силова юлташсем яровизаторсем пулса ĕçлеççĕ.

Ярапайкасси ялсовечĕ çумĕнчи вулав çурчĕн заведующийĕ пулса куçса килнĕ Е. Петрова ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçĕнче пысăк пултарулăх кăтартать. Колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе тивĕçлипе туса пырать. Вăл час-часах калаçусем ирттерет. «Автогигант» колхозра МТФ заведующийĕ пулса комсомолка Юлия Трофимова ĕçлет. Вăл кăçалхи çул кашни ĕнерен 1000—1050 литр сĕт суса илессишĕн пĕтĕм вăйне хурать.

Колхоз хĕрарăмĕсем, Хĕрлĕ Çар боецĕсене вĕсен çĕнтерĕвĕсемшĕн хĕрӳллĕн тавтуса, ĕçпе ответлеççĕ.

— Пирĕн тăвансем, упăшкамсем фронтра юн тăкса гитлеризма хирĕç кĕрешеççĕ, эпир вĕсене тылра хастаррăн ĕçленипе пулăшма тивĕçлĕ, — теççĕ вĕсем.

П. ЯКОВЛЕВ.

ПĔТĔМ ВĂЯ ТĂШМАНА ÇĔНТЕРЕС ĔÇЕ ХУРĂР! Ӳкерчĕк çинче: Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ĕçлекен работница А. С. Корнеева комсомолка. Вăл ленточно-банкоброшнăй цехра мастер помощникĕ пулса ĕçлет, фабрикăри ĕçе лайăх кăтартуллă туса пырать, ăна халĕ профорга суйланă.

Н. МОХОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Хастарлă хĕрарăмсем

ÇĔРПУ. (Телефонпа). Совет хĕрарăмĕсен вырăнĕ отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче татах та ытларах ӳсрĕ. Тăван çĕршыва хӳтĕлеме кайнă арçынсем вырăнне предприятисемпе учрежденисенче хĕрарăмсем тăрса, фронта кирлĕ продукцие пысăк пахалăхпа туса кăларма тытăнчĕç. Акă Рындино ялсоветĕнчен налог агенчĕ çара кайрĕ. Ун вырăнне Зюзина юлташ ĕçлеме тытăнчĕ. Вăл пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен коммунистла кунне—мартăн 8-мĕшне укçа-тенкĕ пухмалли пĕрремĕш квартал планне 127 процент пурнăçларĕ. Çавăн пекех Анатри Кипекçи ялсоветĕнчи налог агенчĕ Федорова, Тивĕш ялсоветĕнчи налог агенчĕ Михайлова, Янсакасси ялсоветĕнчи налог агенчĕ Антонова, Первомайски ялсоветĕнчи налог агенчĕ Васильева юлташсем укçа-тенкĕ пухмалли пĕрремĕш квартал планне 115 процент таран пурнăçларĕç.

Районри финанс пайĕнче ĕçлекен налог инспекторĕ В. Круглая тата бухгалтер В. Николаева юлташсем те хăйсен ĕçĕсене аван туса пыраççĕ. Çапла хĕрарăмсене ответлă ĕçе хăюллăнрах куçарса пымалла.

Н. ЯСНОПОЛЬСКИЙ.

ФРОНТРА АМАННИСЕНЕ ĂНĂÇЛĂН СЫВАТСА ТĂРАР. Ӳкерчĕк çинче: Ведущи врач-хирург Ю. А. Рябушкина нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче аманнă Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсене пăхас тата сыватас тĕлĕшпе кăтартуллăн лайăх ĕçленĕшĕн ăна Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ Грамотипе наградăланă.

Н. МОХОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Совет хĕрарăмĕсем! Пĕтĕм вăя тăшмана çĕнтерес ĕçе хурар!

Хĕрарăмсене ответлă ĕçсене хăюллăнрах куçарар

Совет хĕрарăмĕ хăйĕн тăван çĕршывне чĕререн юратать. Социализмлă çĕршыв ăна тата унăн ачисене пĕртан правăсем, ирĕклĕ пурнăç, телей туса пачĕ. Çав телее совет хĕрарăмĕнчен нимĕнле тăшман та туртса илес çук. Унпа вăл хаяррăн çапăçĕ, çапăçура паттăррăн вилĕ, анчах чуралăхра тепĕр хут пулмĕ.

Совет хĕрарăмĕн паттăрлăхĕ, пултарулăхĕ Ленин—Сталин партийĕ пăхса ÿстернипе тĕрекленсе çирĕпленчĕ. Большевиксен партийĕ, Ленинпа Сталин хĕрарăмсене политикăллă воспитани парса çитĕнтерес ĕçе яланах тимлĕн туса пынă, вĕсене хуçалăхпа государство ĕçне хăюллăн явăçтарнă. Çакă вăл халĕ те çапла пулса пырать.

Ирĕклĕ, пĕртан правăллă пурнăçра партипе правительство ăнлăн пăхса ÿстернĕ хĕрарăмсен политикăллă активлăхĕ, ĕçри пултарулăхĕ пысăккăн ÿсрĕ. Çак активлăх вăл нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах палăрчĕ. Çĕршыв умĕнче хаяр кунсем тăнă вăхăтра хĕрарăм туйма пултарайман ĕç çук. Халăх хуçалăхĕнчи пур ĕçсенче те фронта кайнă арçынсем вырăнне хĕрарăмсем тăчĕç. Вĕсем, производствăри йывăр ĕçсене çĕнетсе, фронт валли ывăнма пĕлмесĕр хĕçпăшал тунтаççĕ, колхозсен уйхирĕсенче хастарлăн ĕçлесе, фронтпа çĕршыва тырă, ăш-какай, сĕт-çу, чĕртавар ытларах та ытларах туса парассишĕн тăрăшаççĕ. Совет хĕрарăмĕ—пултарулă общественница, политикăллă деятель, массăна ертсе пыракан пултарулă руководитель. Совет хĕрарăмĕсем партипе комсомол, совет тата хуçалăх организацийĕсен руководителĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Вăрçă пуçланнăранпа пирĕн районра партипе комсомол тата совет организацийĕсене ертсе пырас ĕçре хĕрарăмсем сахалрах ĕçлетчĕç. Халĕ йăлтах урăхла. Çулпуç Сталин юлташ 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх каланă сăмах хĕрарăмсен политикăллă активлăхне вăйлăн çĕклерĕ. Çулпуç чĕннипе тăван çĕршыва тăшманран хÿтĕлеме çĕршер хĕрарăмсем тăчĕç. Кирек мĕнле ĕçре те пурĕ-пĕрех вĕсем хăйсен пĕтĕм вăйне çĕршыва, Хĕрлĕ Çара пулăшнă çĕре парса ĕçлеме тытăнчĕç.

Агафия Ефимова партин «Сила» колхоз çумĕнчи пуçламăш организацийĕн секретарĕ пулса ĕçлет. Иртнĕ çул уйхирĕн тырпул пухса кĕртес ĕçре вăл кулленхи нормăна 200-шер процент тултарса ĕçлерĕ. Кану сехечĕсенче Ефимова юлташ халăха хаçатсем, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа паратчĕ. Вăл обществăллă ĕçре чи пултарулă активистка. Колхозниксемпе колхозницăсем хĕрÿллĕ патриотка хăйсен бригадирĕ турĕç. Вăл ертсе пынипе бригада ялхуçалăх ĕçĕсене кăтартуллăн, лайăх вĕçлерĕ.

Вера Осиповна Еремеева—учительница. Иртнĕ кĕркунне ăна Красноармейски вăтам шкул директорĕ пулса ĕçлеме лартнă. Ответлă тапхăрта Вера Осиповна хăйне шанса панă ĕçе большевикла хастарлăхпа тытăнчĕ. Вăл ертсе пынипе иртнĕ çул вăтам шкулта вĕренекенсем колхозсене пысăк пулăшу пачĕç. Çĕрулми [illegible], авăн çапрĕç, ударлăн ĕçлесе, кĕске вăхăтрах икĕ пин ытла ĕçкунĕ турĕç; çĕршер пăт тĕштырă оборона фондне хыврĕç.

«Ялмурзино» колхозĕнчи уйхир ĕç бригадин бригадирĕ Ульяна Васильева халĕ ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ пулса ĕçлет. Васильева юлташ кĕске вăхăтрах хăйĕн политикăллă пĕлÿлĕхне пысăккăн ÿстерчĕ. Парти историне вĕреннине практикăллă ĕçре çирĕплетсе пырать. Парторганизацисен секретарĕсене, комсомол организацийĕсене вăл пысăк пулăшу парать. Вăл пултарулă агитатор, ĕçе лайăх организацилеме пĕлекен работник.

Упи вăтам шкулĕнчи учительница А. Петрова юлташ икĕ класа харăс вĕрентет. Икĕ класĕнче те унăн вĕренекен ачасем çирĕп дисциплинăллă, вĕсем шкула пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ, лайăх вĕренеççĕ. Ачасем ăна—вĕренÿри двухсотницăна хĕрÿллĕн юратаççĕ, хисеплеççĕ, унтан пример илеççĕ.

Ĕçре паттăрлăх, пултарулăх кăтартса ĕçлекен хĕрарăмсене районра çĕршерĕн илсе кăтартма пулать. Медицина работницисем отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хăйсен ĕçне уйрăмах пысăк активлăхпа туса пыраççĕ. Андреева, Туганеева врачсем халăх сывлăхне сыхлас ĕçе хăйсен пĕтĕм вăй-хăвачĕсене параççĕ. Трактористка Николаева юлташ трактористсен чи пултарулă бригадирĕ пулса тăчĕ. Тракторсене юсас ĕçре вăл нормăна яланах ирттерсе тултарать. Унăн ĕçне пĕтĕм район мухтать, пахалать.

Юлашки вăхăтра ВКП(б) райкомĕ чылай хĕрарăмсене ответлă ĕçсене куçарчĕ. Колхозница Нина Ильина халĕ Райпланра плановик пулса ĕçлет. Евдокия Егорова—район Совет исполкомĕн кадрсен секторĕн заведующийĕ, Мария Никитина—халăх следователĕ, Юлия Алексеева—районри Госбанк отделенийĕн главнăй бухгалтерĕ. Вĕсем нумаях пулмасть колхозсенче ĕçлетчĕç, халĕ партипе государство ĕçĕсене туса пыраççĕ.

Фронт заказĕсене пурнăçлас енĕпе хĕрарăмсем пысăк паттăрлăх кăтартаççĕ. Н. Григорьева, Д. Антонова, Н. Яковлева стахановкăсем хисеплĕ грамотăсем илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Совет хĕрарăмĕ—пысăк вăй, хăюллă вăй. Ăна татах та çÿлерех çĕклесси—пирĕн задача. Хĕрарăмсене ертсе пыракан ответлă ĕçсене хăюллăнрах куçарар, вĕсене ĕçре кулленхи пулăшу парса пырар.

Г. ТОМАСОВ.

ВКП(б) Красноармейски райкомĕн секретарĕ.

СОВЕТ ПАТРИОТКИСЕМ ГИТЛЕР ВАНДИЧĔСЕМ АШШĔ-АМĂШĔСЕНЕ ВĔЛЕРСЕ ТĂЛАХА ХĂВАРНĂ АЧАСЕНЕ УСРАМА ИЛЕÇÇĔ. Мускаври «Красный богатырь» заводăн 3-мĕш цехĕн лаборантка-спектральщица Елена Семеновна Овчинникова пуçарса янипе, заводри работницăсем [illegible] ачасене усрама илеççĕ. [illegible] 20 [illegible] тăлăх ачасене [illegible] усрама илнĕ. [illegible] Сулейманова [illegible]: завод директорĕ П. Н. Гуляев, парти комитечĕн секретарĕ В. П. Малкова тата работницăсем Т. В. Трушева Солнечногорскран тарса тухнă Светлана Гулинкина пĕрле, С. А. Шарова [illegible] тарса тухнă Вера Сычова пĕрле тата М. М. Цибульская Наро-Фоминскран тарса тухнă Дуся Михайловăпа пĕрле.

Л. ДОРЕНСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Производствăри патриоткăсем

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Чăваш республикинчи хĕрарăмсем, Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур хĕрарăмсем пекех, пĕрлех, фабрикăсенче, заводсенче, транспортра, колхоз уйĕсенче [illegible] тытăнчĕç. [illegible] патриоткăсем, фабрикăсенчи [illegible] Хĕрлĕ Çара [illegible].

Аслă çулпуç Сталин юлташăн [illegible] совет хĕрарăмĕсем [illegible] кăтартса параççĕ. Предприятисенчи работницăсем, инженерно-технически работницăсем [illegible].

Шупашкарти [illegible] заводри работница Пегаева юлташ [illegible] производствăра 10 çула яхăн ĕçлет. [illegible] бригада пулса тăчĕ. Пегаева юлташ [illegible].

[illegible] ван çĕршыв ытларах продукци туса парас, Хĕрлĕ Çара татах та ытларах пулăшасшăн тăрăшаççĕ. Хĕрарăмсем хушшинче двухсотницăсем [illegible]. Канашри вагонсем юсакан заводри работницăсем Храмова, Самохвалова, Казанцева тата ыттисем норма 200-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

Сентябрьринчи «Социализм» артель работницисем Филиппова, Шипунова, Сивова тата ытти юлташсем кулленех 1,5—2 норма тултарса ĕçлеççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче чылай хĕрарăмсем производствăра малтанхи хут пуçласа ĕçлеме тытăнчĕç. [illegible] «Большевик» заводра Хĕрлĕ Çара кайнă [illegible] хĕрарăмсем кунта 100 çын ытла [illegible] ĕçлеççĕ.

Çĕмĕрле комбинатĕнчи работница-стахановка Кулакова, Варягина, Семенова юлташсем [illegible] ĕçлеççĕ. [illegible].

Çавăн пекех [illegible] Канаш станцинчи информаторсем Алексеевăпа Скворцова юлташсем халĕ производствăран уйăрăлмасăрах станци дежурнăйĕ пулма вĕренеççĕ.

[illegible] лĕн, лайăх туса пырать. Чернорабочи пулнă Осипова юлташ та халĕ цех начальникĕ пулса ĕçлет. Вăл та хăйĕн ĕçне тивĕçлипех туса пырать.

Заводсенче фабрикăсенче, артельсенче, промкооперацисенче хĕрарăмсем, тă[illegible] ренсе алла илес движени сарăлса пырать.

В. ИГНАТЬТЕВ.

Вăл халь смена мастерĕ

Ăна, 17 çулхи хĕрачана, ултă çул каялла комбинатра кăна мар, цехра та никамах та пĕлеймен. Вăл ун чухне вăтанарах çÿренĕ, машинăсенчен хăранă. Пуçне хĕрлĕ тутăр çыхса çÿренĕрен пулас, ăна ятпа та мар, «хĕрлĕ тутăр» тесе чĕннĕ.

Вăхăт иртнĕ. Хĕрача станоксем çывăхнерех пыма хăнăха пуçланă. Смена пуçланас умĕн цеха пынă та çынсем ĕçленине пăхса çÿренĕ. Станоксемпе ун пек хĕрсемех ĕçленĕ.

— Часах акă эсĕ те вĕсем пекех ĕçлекен пулăн. Кам пĕлет, тăрăшсан, мастер пулма та пултарăн. Халĕ вĕт ÿркенме кăна юрамасть.

Мастер сăмахĕ хĕрачана хĕпĕртеттернĕ, савăнăç кÿнĕ.

* * *

Каярахпа вăл автоциркульнăй станокпа ĕçлеме куçнă. Малтанхи эрнерех ĕçĕн технологи процесне вĕренсе çитсе, вăл нормăна тултарма пуçланă.

— Ну, мĕнле: «хĕрлĕ тутăр», ĕç каять-и?—ыйтнă ун патне пырса мастер.

— Вăт, акă паян çакăн чухлĕ деталь турăм. Ку таранччен пĕр брак та пулман-ха,—ответленĕ хĕрача.

— Молодец. Тăрăш, часах ытти станоксемпе те ĕçлеме вĕренсе çитĕн. Сана шанма пулать,—тенĕ мастер.

Çамрăк станочница хăвăртлăхсене куллен ÿстерсе пынă. Халь ĕнтĕ вăл хăйĕн юлташĕсенчен иртсе кайнă. Кăтарту хăми çинче те унăн ячĕ чи малти ретре тăнă. Пĕр кунхине вăл нормăна 400 процент тултарнă.

Пĕр-икĕ уйăх ĕçлесен, ăна та урăх станокпа ĕçлеме—детальсене якатса тата çирĕп размер тăрăх туса кăларнă çĕре куçарнă, каярахпа тата ответлăрах вырăна—сверлильнăй станокпа ĕçлеме лартнă.

Пĕррехинче ĕç пĕтнĕ хыççăн цех начальникĕ хĕрача патне пынă та кĕскен савăнăçлă хыпар пĕлтернĕ:

— Мареева юлташ, сана эпир бригадир турăмăр. Ыттисене те ху пек ĕçлеме вĕрентме тăрăш.

Кун хыççăн вăхăт нумаях та иртмен, çамрăк бригадира комбинатри комсомол организацийĕ ленинла-сталинла комсомол ретне илнĕ. Ку вара ăна татах та хавхалантарнă, вăл татах та лайăхрах ĕçлеме пуçланă.

* * *

Халĕ ăна, ултă çул каярах чернорабочи пулнă хĕрачана, цехри рабочисем çеç мар, пĕтĕм комбинат коллективĕ пĕлет. Час-часах унăн ятне пухусенче, канашлусенче асă илеççĕ, хаçатсем çине çыраççĕ.

— Вăл пирĕн паллă стахановка, çамрăк мастер,—теççĕ рабочисем ун çинчен.

Вăл пуçне халĕ те хĕрлĕ тутăр çыхса çÿрет. Анчах ăна халь никам та «хĕрлĕ тутăр» тесе чĕнмест. Ăна каллех «Варя», «Мареева юлташ» тесе чĕнеççĕ.

Кăçалхи февраль уйăхĕнче ăна, Варвара Марееванна, смена мастерне лартрĕç. Хастарлă хĕрача хăйне шанса панă ответлă ĕçе тивĕçлипе туса пырать. Ответлă ĕçе куçарнă хыççăнах вăл рабочисемпе работницăсене стахановла ĕçлеме вĕрентме тытăнчĕ. Ĕç вăхăтĕнче вăл яланах цехра, рабочисем хушшинче çÿрет, пĕлменнисене вĕрентет, лайăх опытсем çинчен каласа парать.

Хастарлă работница, çамрăк мастер кĕске вăхăт хушшинчех ĕçре пысăк улшăну туса пултарчĕ. Смена халĕ куллен хăйне панă заданисене 150—250 процент тултарать, рабочисенчен нормăна тултарса ĕçлейменнисем çук, вĕсенчен çурри ытла двухсотниксемпе трехсотниксем шутланаççĕ. Е. Грыжина юлташ чи ответлă ĕçре ĕçлет. Уйăх каялла кăна вăл нормăна 1,5—2 хут ирттерсе тултарнă. Халĕ вăл куллен виçшер норма тăвать. Унпа пĕрле ĕçлекен Шолковăпа Савинкина юлташсем февраль уйăхĕнче, вăтамран илсен, нормăна 3 хут ирттерсе тултарса пынă.

Çамрăк работница Кровякова юлташ производствăна пĕр уйăх каялла пырса кĕнĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех вăл техникăна вĕренсе алла илчĕ. Вăл пĕр брак тумасăр ĕçлет, нормăна 150 процент тултарать.

Çаксем пек ĕçлеççĕ сменăра ытти рабочисемпе работницăсем те. Вĕсене мастер ĕçре пысăк пулăшу парать. Мареева юлташ кирлĕ чухне 12—15 сехет хушши цехран тухмасăр ĕçлет.

Нумаях та пулмасть цехра комсомолецсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта, ытти ыйтусемпе пĕрлех, Мареева юлташ ВКП(б) кандидатне кĕме ВЛКСМ райкомне рекомендаци пама ыйтса çырнă заявленине пăхса тухрĕç. Пуху пĕр сасăпах В. Мареева юлташа ВКП(б) ретне кĕме рекомендаци пама ыйтас тесе йышăнчĕ.

Х. ЛИСИН.

Хĕрарăмсен коллективĕ

ÇĔРПУ. Иртнĕ çулта Райпищекомбинат кая юлса пынă. 1941 çулта, декабрь уйăхĕнче, çулталăкри ĕçсене пĕтĕçтерес шутпа комбинат директорĕ Васильева юлташ производствăллă канашлу туса ирттерчĕ. Кунта производство мĕншĕн юлса пыни çинчен тĕплĕн сÿтсе-яврĕç. Производство ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă решени йышăнса хăварчĕç. Халĕ комбинатра ĕç дисциплинин чылаях çирĕпленчĕ, социализмлă ăмăрту анлăн сарăлма пуçларĕ. Кирлĕ оборудованисем, чĕртавар, вутă тата ыт. те вырăнтах çителĕклĕ таран тупăнчĕç. Производство пĕр простойсăр, пĕр браксăр ĕçлеме тытăнчĕ.

Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, Райпищекомбинат январь уйăхĕнчи програмăна нумай ирттерсе пурнăçларĕ. Комбинат коллективĕ Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хушăнса, февраль уйăхĕнче татах та пысăк çитĕнÿ турĕ, уйăх програмине икĕ хут çурă ытларах ирттерсе тултарчĕ.

Производствăра уйрăмăнах О. Каштанова, З. Хомякова, М. Ядринцева тата кăвас производствин мастерĕ О. Смирнова юлташсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна яланах ирттерсе тултараççĕ.

Райпищекомбинатра йăлтах хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Хĕрарăмсен коллективĕ мартăн 8-мĕш кунне пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илчĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Хамăрăн мĕнпур вăя—тăшмана аркатма

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне кăçал эпир вăрçăн хаяр обстановкинче кĕтсе илетпĕр. Вăрçă пушарĕн шăрпăлă тĕтĕмĕ мĕнпур çĕр чăмăрĕпех сарăлчĕ. Малта пыракан мĕнпур этемлĕхĕн тăшманĕ—Германи фашизмĕ хăйĕн хаярлăхĕ тĕлĕшпе ĕмĕрне пуйман вăрçа вуншар государствăсене, çĕршер миллион çынсене хутшăнтарчĕ.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен фашизмран хаяртарах та ылхенлĕрех тăшманĕ урăх пулман та. Гитлер çынсен, чи малтанах хĕрарăмсен, мĕнпур прависемпе тивĕçлĕхĕсене пĕтерсе тăкма тăрăшать. Фашистла Германире хăйĕнче Гитлер хĕрарăмсем валли мĕскĕн кунçул хатĕрлесе хунă. Фашистла Германия чуралантарнă çĕршывсенчи хĕрарăмсен прависене хаяррăн та ирсĕррĕн хĕсĕрлесе пыраççĕ. Анчах гитлеризм пуринчен ытларах славян хĕрарăмĕсене хăратать. Славянсене кураймаслăхне пытараймасăрах, Гитлер çапла калать: славян хĕрарăмĕсен пĕр пайне вĕлерсе пĕтеретĕп, тепĕр пайне хĕрарăмăн чи пысăк хаваслăхне — ача амăшĕ пуласине—пĕтерсе чураcем туса хуратăп, тет.

Пирĕн халăхăн фашизма хирĕç пыракан отечественнăй вăрçи пуçлансан малтанхи кунсенчех совет хĕрарăмĕ хăйĕн мĕнпур вăй-хăватне фронта пулăшас ĕçе, пирĕн тăван çĕршывăн чыслăхĕшĕн, ирĕкĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе пачĕ. Совет влаçĕ вăхăтĕнче пирĕн çĕршыври хĕрарăмсем ăнланулла, культурăллă, хăйсен вăйне пĕлекен çынсем пулса тăчĕç. Вĕсем халĕ, темиçе çул каярахрипе танлаштарсан, пур тĕрлĕ ĕçе те хăвăртрах та çăмăлрах вĕренсе пыраççĕ. Çапла вара совет хĕрарăмĕсем хăйсенчен фронт ыйтнисене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Совет патриоткисем ĕçе юратни тата ĕç çине ăнланса пăхни вăрçăччен арçынсене çеç тивĕçлĕ профессисене тесе шутланнă профессисене вĕренсе пыма пулăшрĕç, халĕ те пулăшаççĕ. Сăмахран, пăс турбинисен машинисчĕсем хушшинче вăрçăччен хĕрарăмсем пулман. Халĕ Кузнецкри Сталин ячĕпе тăракан металлурги заводĕнче темиçе çĕнĕ работница çак квалификацие вĕренсе çитнĕ, çак кăткăс ĕçе вĕсем ăнăçлăн туса пыраççĕ. Железнодорожницăсен, шахтеркăсен тата ыттисен хисепĕ те çав тери ÿссе кайрĕ. Çак пашкал примерсене пирĕн çĕршывра пиншерĕн тупма пулать.

Совет влаçĕ пулнăранпа 10 миллион хĕрарăма ытла производство ĕçне хутшăнтарнă. Çак вăхăтра пиншер те пиншер хĕрарăмсем професси илнĕ, хăйсен техникăллă пĕлĕвне ÿстернĕ. Патша Российинче хĕрарăм-инженерсем, техниксем, агрономсем, учĕнăйсем нумай пулнă-и? Ун пек çынсем пĕрерĕн çеç шутланнă. Совет влаçĕ пулнăранпа хĕрарăм-инженерсем, архитекторсем, хозяйственниксем, государство деятелĕсем, чугунçул çинчи машинистсем, трактористсем, комбайнерсем т. ыт. те нумай çитĕнчĕç.

Совет хĕрарăмĕсенчен нумайĕшĕсем предприятисене те ертсе пыраççĕ. Ĕççынни депутачĕсен Совечĕсенчи суйласа лартнă должноçсенче те, партипе общество организацийĕсенче те, колхозсен пуçĕнче те хĕрарăмсене курма пулать.

Патриотизм тивĕçлĕхĕ пур сийри хĕрарăмсене те производствăна чĕнет. Фабрикăсене, заводсене, транспорта ĕçлеме килхуçи хĕрарăмĕсем пыраççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем халĕ хăйсен ĕçне лайăх туса пыраççĕ.

Нимĕçсен захватчикĕсене хирĕç, оборона тумалли çирĕплетнĕ рубежсен строительствинче те тĕрлĕ сийри халăхăн рядовой совет хĕрарăмĕсем пăхартуллăн ĕçлерĕç.

Колхозлă ялта çара кайнă трактористсем, комбайнерсем, шоферсем, юсакан рабочисем, бригадирсем, ферма пуçлăхĕсем, колхоз председателĕсем т. ыт. вырăнне те хĕрарăмсем тăчĕç. Çакăнта хĕрарăмсем хăйсене шанса панă ĕç çине хуçа пек пăхнине, ăна типтерлĕ туса пынине, тăван çĕршыв умĕнчи парăмсене ăнланса тултарса пынине эпир паян хаваслансах палăртса хăваратпăр.

Акă çавăн йышши фактсенчен пĕрне кăтартса парăпăр. «Пролетарская победа» колхозри сурăх ĕрчетекен ферма бригадирĕ М. Кочнева (Новосибирск облаçĕ, Топки районĕ) фермăна хăй аллине илсенех сурăхсем вилессине чылай чакарчĕ. Кочнева тăрăшса ĕçленине пула, фермăри кашни çĕр пуç сурăхран 133 путек илсе, вĕсене пурне те сыхласа усранă. Колхоз государствăна какай памалли плана тултарнă. Планран ирттерсе оборона фондне 40 сурăх, 100 килограмм ытла çăм панă.

Нумай колхозсенче хĕрарăмсем хăйсене шанса панă ĕçе лайăх, вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пынине кăтартакан татах тепĕр тĕслĕх илер. Башкир АССР-чи Альшеевск районĕнчи «Красный Октябрь» колхоз председателĕ фронта кайнă. Колхозниксем артель председателĕ пулма Соколова юлташа суйланă. Халĕ вăл обществăллă хуçалăха ăнăçлăн ертсе пырать. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене тултарнă, вăрлăх хатĕрлесе хунă, выльăх апачĕ хатĕрленĕ, çуракине хатĕрленсе çитнĕ.

Хамăрăн уяврa эпир Хĕрлĕ Çар ретĕнчи тата тăшманăн тылĕнчи партизансен отрядĕнчи хĕрарăмсем çинчен уйрăмах пăлханулăн та ăшшăн калатпăр. Вĕсем Совет влаçĕ вăхăтĕнче ÿссе çитĕннĕ хĕрарăмсем мĕнле геройлăх, мĕнле паттăрла ĕçсем тума пултарнине кăтартса параççĕ.

Совет хĕрĕ, Совет Союзĕн геройĕ Зоя Космодемьянская, фашистла ирсĕрсем вĕлернĕскер, тунă паттăр ĕçе пурте лайăх пĕлеççĕ. Ирсĕр тăшмансем унран çав тери мăшкăлланă пулин те, ăна асаплантарнă пулин те, çамрăк патриотка совет çыннин пысăк тивĕçлĕхне пĕр самантлăха та çухатман. Вара палачăн йăлăллă кантăри унăн мăйне пăвса илсен, пирĕн героиня фашистсем вĕлернĕ вырăна вăйпа хăваласа пухнă совет çыннисене усçăн кăшкăрма вăй-хăват тупнă:

— Эпĕ вилĕмрен хăрамастăп, юлташсем! Хамăрăн халăхшăн вилни вăл — телей, — тенĕ.

Казинск МТС-ĕн трактористчĕ Аня Миргородская, хăйĕн ялне нимĕçсем пырса кĕрсен, паттăрлăх, вилĕмрен хăраманнине кăтартса панă. Вăл хĕрлĕ командира çăварса илнĕ темиçе фашиста гранатăпа пĕтерсе тăкнă, унтан аманнă 8 красноармееца пытарса усранă. Паллах, çакă хăйшĕн мĕн тери хăрушă пулнине вăл лайăх пĕлнĕ. Партизанла отрядсенче мĕн чухлĕ хĕрарăмсем активлăн кĕрешеççĕ, мĕн чухлĕ хĕрарăмсем-врачсем, сестрасем, дружинницăсем тăшманăн вут-çулăмĕ айĕнче, хăрушлăха пăхмасăрах, аманнă боецсемпе командирсене—тăван çĕршыва мухтавлăн хÿтĕлекенсене—пулăшу параççĕ!

Паллах ĕнтĕ, совет хĕрарăмĕсем вăрçă вăхăтĕнче хăйсем чăн-чăн патриоткăсем пулнине, пирĕн аслă тăван çĕршывăн ăнланулла хĕрĕсем пулнине кăтартса пачĕç.

Анчах паян, Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕнче, çак итогсене тунă май, алла чĕре çине тытса пур совет хĕрарăмĕсем те хăйсен вăй-хăватне государство оборонине, совет тылне çирĕплетес ĕçе янă тесе калама пултаратпăр-и? Хуласемпе ялсенчи пур хĕрарăмсем те пĕр çын юлмиех, хăйсен вăйĕпе пĕлĕвне çĕршыв оборонине, тăшмана аркатса тăкас ĕçе панă тесе калама пулать-и? Ун пек калама çук. Ман шутăмпа, хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕнче кашни хĕрарăмăн хăйĕнчен хăй çапла ыйтмалла: фронт валли эпĕ мĕн кирлине пурне те тунă-ши? Вара пурте шухăша кайĕç те хăйсем тăван çĕршыв умĕнче парăмлă пулнине, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот умĕнче парăмлă пулнине ăнланса илĕç. Вара фронт валли сахал ĕç тунисем те хăйсем татах та лайăхрах, татах та тухăçлăрах, ытларах вăй хурса ĕçлеме пултарнине тавçăрса илĕç. Ку тĕлĕшпе ĕнтĕ работницăсем те, колхозницăсем те, хĕрарăм-служащисем те, килхуçи хĕрарăмĕсем те, вĕренекенсем те питĕ пысăк ĕç тума пултараççĕ.

Вăрçă вăл — хĕрхенÿсĕр. Вăл пирĕн халăхран мĕнпур вăй-хăвата пухма ыйтать. Сталин юлташ çапла кăтартса парать: «Малашне татах та нумай йывăрлăхсем пуррине манма юрамасть. Тăшман поражени тÿсет, анчах та ăна аркатса тăкман-ха, унтан та ытларах,—ăна пĕтерсе тăкман-ха. Тăшман вăйлă-ха. Ăнăçусем тăвас тесе, вăл юлашки вăйĕсене пухĕ». Çавăнпа та мĕнпур халăхăн вăйне ытларах пухмалла, тăшмана аркатма, ăна пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшса пымалла.

Вăрçă пирĕнтен ытларах та ытларах çынсем ыйтать. Çапла ĕнтĕ производствăран, ялхуçалăхĕнчен, транспортран т. ыт. çĕртен фронта кайнă арçынсем вырăнне хĕрарăмсен çĕнĕрен çĕнĕ отрячĕсем кирлĕ пулаççĕ. Ĕç тухăçлăхне татах та ытларах ÿстермелле, Сталин юлташ чĕннĕ пек, икĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлемелле.

Вырăнти обществăллă тата совет организацийĕсем çине питĕ ответлă ĕç тивет. Хĕрарăмсен çĕнĕ кадрĕсене тĕрлĕ профессие пĕр чарăнмасăр вĕрентмелле; промышленноçпа транспортра çеç мар, ялхуçалăхĕнче те хĕрарăмсен çĕнĕ кадрĕсем, — бригадирсем, звеньевойсем, трактористкăсем, комбайнеркăсем, колхоз руководителĕсем хатĕрлесе пымалла. Хĕрарăмсене ĕçе хутшăнтарнипе пĕр вăхăтрах вырăнти организацисен, хăйсен вăй-хăватне производствăна паракан ача-амăшĕсем хăйсен ачисемшĕн ан пăшăрханччăр тесе, ача учрежденийĕсен хисепне ÿстерес тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлемелле.

Пирĕн хĕрарăмсен татах тепĕр питĕ паха ĕç пур. Эпĕ çар ĕçне тăрăшса, çине тăрса вĕренесси çинчен, сывлăшран тапăннинчен хÿтĕленме вĕренесси çинчен калатăп.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар, ылханлă тăшмана паттăррăн та вăйлăн пырса çапаканскер, хăйĕн çĕнтерĕвĕсемпе пĕтĕм тĕнчене хаваслантарать. Гитлер пусмăрланă пур халăхсем те Хĕрлĕ Çара питĕ хăватлă вăй вырăнне, фашистла юхан-сурана пĕтерсе тăкма пултаракан вăй вырăнне хурса пăхаççĕ.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа панă приказра Сталин юлташ çапла кăтартса пачĕ: пирĕн çарăн паха та хисеплĕ тĕллевĕсенчен пĕри «пирĕн Совет территорине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларасси, нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕ айĕнчен пирĕн хуласемпе ялсенчи граждансене, вăрçăччен ирĕклĕ тата йĕркеллĕ пурнăçпа пурăннăскерсене, халĕ ĕнтĕ пусмăр айне пулнăскерсене, çаратнипе, юхăнтарнипе, выçлăхпа асаплантараканскерсене ирĕке кăларасси пулса тăрать, юлашкинчен, хамăрăн хĕрарăмсене нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсен мăшкăлĕпе пусмăрĕнчен ирĕке кăларасси пулса тăрать».

Социализмлă çĕршыври хĕрарăмсен Хĕрлĕ Çарăн çак аслă задачисене яланах асра тытмалла, ăна пурнăçа кĕртме мĕнпур вăйпа пулăшса пымалла.

Çĕнтерÿ çывхарасси, хĕрарăм юлташсем, пирĕн ĕçрен, пирĕн пултарулăхран, пирĕн вăй-хăватран нумай килет. Пурсăмăр та пĕр çын пек пулса татах та ытларах тăрăшса ĕçлер, ĕç тухăçлăхне хăпартар, фронта мĕн кирлине ытларах туса пама тăрăшар, вара эпир çĕнтерÿ тăвас вăхăта çывхартма пулăшăпăр, вара çав çĕнтерĕве те Хĕрлĕ Çар ытла пысăк жертвăсем тумасăрах тума пултарĕ.

Çапла ĕнтĕ, совет хĕрарăмĕсен мĕнпур вăйне тăшмана аркатса тăкас вăхăта çывхартма, çĕнтерÿ вăхăтне çывхартма парар!

ВАЛЕНТИНА ГРИЗОДУБОВА.
Совет Союзĕн Геройĕ, Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен Комитечĕн председателĕ.

НИМĔÇ ОККУПАНЧĔСЕНЧЕН ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ХУЛАСЕМПЕ ЯЛСЕНЧЕ. Калинин хулинчи ĕççынисем гитлерла вăрă-хурахсем çĕмĕрсе хăварнă хулари пурнăçа пысăк хăвăртлăхсемпе йĕркене кĕртеççĕ. **Ӳкерчĕк çинче:** Калинин хулинчи сутĕç пайĕн çĕнĕрен уçнă ача садĕнче.

Г. ПЕТРУСОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

салтакран ытла юлман. Хĕçпăшал тĕлĕшпе те эпир питĕ пысăк çухатусем тӳсрĕмĕр. Пирĕн 5 ручной пулемет тата темиçе винтовка çеç тăрса юлнă. Кĕске вăхăт хушшинче ротăра 3 командира улăштарчĕç. Командирсенчен пĕрне вĕлерчĕç, иккĕшне амантрĕç. Пирĕн полкăн ытти подразделенийĕсем те пысăк çухатусем тӳсрĕç. Çак хыпарсене эпĕ полк командирĕнчен Лемпке капитанран тата батальон командирĕнчен Гоппе капитанран пĕлтĕм, мĕншĕн тесен эпĕ вĕсен шоферĕ пулнă».

* * *

Нимĕçсен вилнĕ ефрейторĕ С. Поммеринг çумĕнче вăл хăйĕн тăванĕсем патне çырнă çырăва тупнă. Вăл çапла çырать: «Çăкăр паекне 300 грама çити чакарчĕç, çĕрулми пирĕн пачах та çук. Тăваттămĕш кун ĕнтĕ пире йӳçĕтнĕ купăста çитереççĕ. Юлашки çăкăр татăкне эпĕ ĕнер çисе янăччĕ. Эпир пиçиххисене хытăрах та хытăрах туртса çыхатпăр».

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен паллă мар салтакĕ февралĕн 20-мĕшĕнче арăмĕ патне çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Нимĕç салтакĕ хăйне хăй çавтери тулăксăр та тискер тыткалать. Кун çинчен çырса пĕлтерме те сăмах çитмест. Пирĕн салтаксем аманнă вырăссене, вĕсене вырнаçтарма çурт çук тесе, персе вĕлереççĕ. Аманнисем сахал чухне те вĕсем çавăн пекех тăваççĕ. Вĕсене хуралласа тыла илсе каймашкăн нимĕç салтакĕсене позицирен илме кирлĕ мар, тесе калаççĕ. Тыткăна лекнисен колонни пынă чухне, вăйсăрланса халран кайнă пирки кая юлакансене пере-пере пăрахаççĕ».

* * *

Гитлерла бандитсем Калинин облаçĕнчи Никифоровка ялĕнчен тухса кайнă чухне ялти пур халăха та çаратнă, 1130 çурта, 4 шкула, чиркĕве тата хуçалăхри ытти çуртйĕрсене вут тивертсе çунтарса янă.

Çапăçу пулса иртнĕ вырăнсенче

СУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, мартăн 2-мĕш. (ТАСС). Эпир халь çеç çапăçу пулса иртнĕ вырăнсемпе пыратпăр—юрпа витĕннĕ Ильмень кӳлли таврашĕнчи вăрмансем, шурлăхсем урлă каçатпăр, çунтарса кĕл туса хăварнă ялсем витĕр тухатпăр, çĕмĕрĕлнĕ кĕперсем умĕнчен иртетпĕр. Пĕр-ик кун каялла çеç çак вырăнсенче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ.

Нимĕçсене мĕнтери вăйлăн аркатни халĕ утăмрах курăнать. Пирĕн боецсем тăшмана çавăрса илсе, ăна хĕснĕçемĕн хытăрах хĕссе пынă, ялсенчен çапа-çапа кăларнă та, юлашкинчен вара, пĕр вырăна хĕсĕрлесе пырса, пуçĕпех çапса аркатнă. Пĕр ялта виçĕ сарайра тупă тулли пех тăшманăн шаршанласа купаланă виллисем выртаççĕ. Унта 200 виле те пулĕ. Тепĕр ял умĕнче тăшманăн пралук картисем сапаланса выртаççĕ, вĕсене пирĕн пехота аркатса тăкнă. Çак вырăнта нимĕçсен оборонин вăйлă çирĕплетнĕ линийĕ пулнă. Çулăн икĕ енĕпе те, юр айĕнчен, вилнĕ нимĕçсен аллисем, урисем туха-туха тăраççĕ. Станцăра пĕр эшелон (нимĕçсен 571.278-мĕш №-лĕ пысăк хура свастикăллă паровоэĕ, темиçе вуншар çĕмĕрĕлнĕ вагонсем) тăрать. Ытти ялсенче те, ăçта пăхнă унтах, пăрахса хăварнă çар пурлăхĕсем, боеприпассемпе обмундированисем йăваланса выртаççĕ.

Танатана хупăрласа хупнă тăшмансем вăрçăра поражени тӳснишĕн çиленсе, хăйсен çиллине мирлĕ вырăс çыннисене асаплантарнипе шăнарнă, халиччен курман-илтмен тискер ĕçсем тунă. Борки совхозĕнче вĕсем 20 çынна, ватă старниксемпе карчăксене — инвалидсене çунтарса янă. Обша ялĕнче фашистла тискер кайăксем тыткăна илнĕ 7 красноармеец персе пăрахнă. Курланское ялĕнче нимĕçсем ватă карчăка, унпа пĕрле тата ачин икĕ хĕрне çунтарса янă. Нимĕç фашисчĕсем Свинорой ялĕнче, партизансем почтăла телеграф конторн çине тапăннăшăн ответлесе, заложнике илнĕ 18 çынна персе вĕлернĕ, вĕсем хушшинче 16 çулхи çамрăксем те, ватă старниксем те пулнă.

Вырăнта пурăнакан çынсем нимĕç гарнизонĕнчи салтаксен шухăш-кăмăлĕсем начарри çинчен, вĕсем хăйсем пĕтĕмпех пĕтес патне çитнине чухласа пуçĕсене усни çинчен кала-кала параççĕ. Нимĕç гарнизонĕсен продовольстви те çитмест, боеприпассем те сахал. Вырăнта пурăнакан халăх финсем, апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен нимĕçсенчен те япăхрах пурăнаканскерсем, нимĕç салтакĕсем çине гранатăсем ывăтнине курнă. Нимĕçсемпе финсем пĕр-пĕрин çине пăшал пеме тытăннă, хăшне-пĕрне вĕлернĕ, хăшне-пĕрне амантнă.

Халĕ ĕнтĕ Ильмень кӳлли таврашĕнчи ялсенче каллех совет пурнăçĕ пуçланать. Полавск районĕнче партипе совет оргăнĕсем ĕçлеме тытăннă. Ĕççынни депутачĕсен райсоветĕн председателĕ Алексеев юлташпа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Иванов юлташ, халь çеç партизансен отрячĕсенчен таврăннăскерсем, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе капашлу туса ирттерчĕç. Районри ответлă ĕçсене туса пыма нимĕç оккупанчĕсемпе паттăррăн çапăçнă партизансене уйăра-уйăра лартаççĕ. Партизан Зуев—Мануйловскри ялсовет председателĕ, партизан Алексеев — Кузминскра, Смирнов—ялсовет председателĕ—Веретейскра ĕçлеççĕ. Вĕсен пĕтĕм тимлĕхĕ халĕ пĕр ĕç çине куçнă, вăл—нимĕçсем ялсенчен хăваласа кăларнă халăха вырнаçтарасси пулать. Çак ĕç çăмăл ĕçех мар. Вăрă-хурахла фашистсем Луженскпа Городской ялсоветĕсенче пурăнмалли пур çуртсене те тенĕ пекех вут тĕртсе çунтарса янă. Кузьминскпа Веретейск ялсовечĕсенче те çавнашкалах фашистсен вутĕнчен çăлăннă çуртсем питĕ сахал.

Нимĕçсенчен ирĕке кăларнă районсенче пурăнакан халăхсем нимĕçсем аркатнă хăйсен хуçалăхне çĕнĕрен юсама тытăнаççĕ, вĕсен ĕçри хавхаланăвĕ каламалла çук пысăк. Фанера заводне ĕçе янă. Ялхуçалăх ĕç хатĕрĕсем пухаççĕ, çураки валли вăрлăх хатĕрлеме тытăннă, тăлăх ача-пăчасене вырнаçтараççĕ. Халь çеç ĕçлеме тытăннă военнăй комиссариата фашист танатинчен хăтарнă çынсем пыраççĕ. Вĕсем ылханлă тăшмана, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç çапăçăва кайма хĕçпăшал ыйтаççĕ.

И. ДЕНИСОВ.

Нимĕçсен аэродромне аркатни

СУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, мартăн 5-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Пирĕн авиаци хамăрăн тинçĕрти войскăсене нимĕçсен çавăрса илнĕ 16-мĕш армийĕн юлашкийĕсене пĕтерме активлăн пулăшса пырать.

Çак кунсенче, çил-тăман пирки начар çанталăк тăнă пулин те, тăшманăн пĕр пысăк аэродромне çĕмĕрсе тăкнă. Пирĕн авиаци çавтери хăвăрт пырса тапăннă, çакăн пирки противникăн зенитнăй артиллерийĕ часах пеме тытăнайман. Совет истребителĕсем темиçе хутчен умлăн-хыçлăн атакăласа, тăшмана [illegible] аэродром çинче çирĕм самолета [illegible]. Çак вăхăтра Беклишев летчик хăйĕн маттурлăхĕпе пултарулăхне кăтартнă. Ун çинчен Совет Информаци Бюровĕн ĕнерхи пĕлтерĕвĕнче каласа панăччĕ. Вăл хăвăрт çаврăнса нимĕç самолечĕсен хыçне вĕçсе пынă та, хăйсене тапăнасса туймасăр аэродром çине ларма тытăннă машинăсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе противникăн 5 транспортнăй самолетне çĕмĕрнĕ. Беклишев хăй зенитнăй орудисем пенинчен пĕр сиенсĕрех хăтăлнă.

Тăшман пĕтĕмпех çухалса кайнипе [illegible] пирĕн летчиксем çак аэродром çине [illegible]. Ку аэродром çинче тăшманăн 30 самолет пĕтерсе тăкнă.

Двухсотница Шура

Чăмăр питлĕ, тулли кĕлеткеллĕ, лутрарах хĕр цеха яланхи пекех ир тата савăнăçлăн çитрĕ. Хăйĕн станокне хирĕçех çакăнса тăракан ăмăрту хăми çине йăпăрт пăхса илчĕ те:

— Ĕнер çĕрçитмĕл пиллĕк, паян ытларах пулать, — терĕ смена мастерне.

Хăй çавăнтах ĕçе пикенчĕ. Инструментсене йĕркипе хурса тухрĕ, детале вырнаçтарса лартрĕ, унтан станок аврне туртрĕ. Станок шавлама тытăнчĕ. Станокăн шĕвĕр пăри çавра детале пĕр хĕрхенӳсĕр шăтарма тытăнчĕ. Хĕрĕн патмар аллисем детале вăр-вар йăтса илсе урайне хураççĕ. Харсăр хĕрпе хурçă станок çапла пĕр шутлă пулса ĕçленипе детальсем татти-сыпписĕр тухса тăраççĕ. Вĕсен ĕçĕ кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче çеç пĕр 10—15 минутăлăха чарăнать. Сакăр сехет хушшинче вĕсен хисепĕ темиçе çĕре те çитет.

Смена вĕçленчĕ. Мастер кам мĕн чухлĕ ĕçленине ăмăрту хăми çине паллă тăвать: «Сверловщица Александра Миронова — 200», — çырать вăл.

Ку юнашар тăватă хĕр-тусĕсемпе ăмăртса ĕçлекен Миронова юлташ сменăри нормăна 200 процент тултарнине пĕлтерет. Çавăншăн ăна ĕçри юлташĕсем юратса, хисеплесе «Двухсотница Шура» теççĕ.

Канашри вагонсем юсакан завода Шура 1934 çулта Канаш районĕнчи Ямапкасси ялĕнчен килсе кĕнĕ. Ялти хăюсăр, анчах ĕçчен хĕр малтанах чернорабочи пулса ĕçленĕ. Кураççĕ: Шура — пултаруллă хĕр. Çавăнпа ăна механически цеха илсе, ĕçе вĕренме мастер çумне çирĕплетеççĕ. Тепĕр çурçултан Шура хăй тĕллĕн ĕçлекен станочница пулса тăрать.

— Заводпа пĕрлех ӳссе пыратпăр. Кăçал 4-мĕш разряда куçарчĕç. Ĕçне 5-мĕш разрядăнне те тăватпăр, — тет Шура хăйĕн çинчен.

Чăнах та Миронова юлташ темĕнле ĕçе те тăвать. Пĕррe цеха васкавлă заказ панă. «Кама хушас ăна» — шухăшланă смена мастерĕ Сычов юлташ, ĕçĕ ытла та кăткăсран никама пама аптăраса тăнă.

— Хамăн тытăнса пăхас мар-и, мĕн пулать-килет,—тенĕ Шура ответлă задание хăй çине илсе.

Тытăннă — тунă. 20 сехетлĕх ĕçе 8 сехетре тунă. Сменăри нормăна 240 процент тултарнă. Çакăн пек пысăк çитĕнӳ тума ăна пĕр вăхăтрах икĕ станокпа ĕçлени пулăшнă.

— Икçĕр хĕрĕх процент чикĕ мар. Унтан ытларах та ĕçлессĕн туйăнать. Çитес кунсенчех ĕç тухăçлăхне 300 процента çитерес тетĕп,—тесе хăйĕн паха ĕмĕтне уçса калать Шура.

Т. Ив.

Артельри стахановкăсем

КАНАШ, (**Телефонпа**). «Авангард» артельри хĕрарăмсем ĕçхĕрарăмĕсен кунне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ. И. Михайлова, А. Балабанова стахановкăсем хăйсен февраль уйăхĕнчи ĕç нормисене 250 процент тултарчĕç. Март уйăхĕн малтанхи эрнинче вĕсем тата ăнăçлăрах ĕçлерĕç. Уйрăмăнах Г. Никифорова ертсе пыракан цех аван ĕçлет. Унăн цехĕ Хĕрлĕ Çар валли тумтирсем çĕлет. Цех плана ытлашшипех тултарнă. Цехри чи лайăх ĕçлекен стахановкăсенчен А. Смирновăпа Абрамовăна палăртса хăвармалла.

«Красный воин» артельре В. Николаева, С. Плотникова, Е. Сотнина стахановкăсем юлашки вăхăтра та хăйсен ĕç хăвăртлăхĕсене чакармарĕç. Вĕсем яланах хăйсен ĕç нормисене 200-шер процент тултарса пычĕç. А. Варламовăпа Л. Яковлева юлташсем хăйсен кулленхи нормине 250 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Васкавлă заказсене ăнăçлăн пурнăçлаççĕ

СЕНТĔР. Чăвашдревпромсоюз системине кĕрекен «Дружба» леспромартель 1941 çулта çунасемпе йĕлтĕрсем тумалли васкавлă заказсене ытлашшипех пурнăçланă. Ку артельре кăçалхи 1-мĕш кварталта та васкавлă заказсене пысăк ăнăçлăхпа пурнăçласа пыраççĕ. Артель председателĕ Пайманов юлташ кунта артель организациленнĕренпех ĕçлет. Вăл 12—13 çул хушши ĕçлесе артель хуçалăхне лайăх вĕренсе çитнĕ. Халĕ Пайманов юлташ ВКП(б) членĕн кандидачĕ. Вăл хăйне шанса панă производствăна малти вырăна кăларассишĕн тăрăшать. Пур ĕçре те хăйне чăтăмлăн, çирĕп тытса рабочисене пример кăтартать. Артель членĕсем хушшинче массăллă агитаци ĕçне лайăх организациленĕ. Рабочисем социализмлă ăмăртăва хутшăнса вăхăта шутламасăр ĕçлеççĕ. Васкавлă заказсене пурнăçланă çĕрте стахановец Антонов юлташ сменăри нормăна 400 процент таран тултарса пырать. Уйрăмăнах вăл фронт валли çунасем тумалли заказа пурнăçланă çĕрте пысăк активлăхпа ĕçлерĕ.

С. Шурнеев юлташ малтан çунасем тумалли заказа пурнăçланă çĕрте ĕçленĕ. Унта вăл сменăри нормăна икĕ хут тултарса пынă. Унтан вăл йĕлтĕрсем тăвас ĕçе алла илнĕ те ытти рабочисене те çак ĕçе ăнăçлăн вĕрентнĕ.

60 çулти Янышев юлташ çунасем тунă çĕрте 2,5 норма ытла тултарса ĕçленĕ. Халĕ вăл фронт валли урапасем тумалли заказа пурнăçланă çĕрте ĕçлет. Ку çĕнĕ ĕçе те вăл часах хăнăхса çитрĕ, сменăри нормăна чылай ирттерсе тултарать.

Н. Белов юлташ та çунасем тунă çĕрте пĕр браксăр, сменăри нормăна 2 хут тултарса ĕçлерĕ. Халĕ артель çĕнĕ детальсем тума заказ илнĕ. Белов юлташ çак çĕнĕ ĕçе пурнăçлама тытăнчĕ. Питех те кирлĕ детальсене тума Белов тимлĕн вĕренет. Юлашки вăхăтра вăл çĕнĕ ĕçĕн технологи процесне хăнăхса пычĕ, сменăри нормăна ытлашшипех тултарма пуçларĕ.

Çавăн пекех Октябрьски районри Хуракасси ялсоветĕнчи куллен кирлĕ таварсем тăвакан артель те ăнăçлăн ĕçлет. Артель председателĕ Мартынов юлташ васкавлă заказсене пурнăçланă чухне рабочисене пĕлсе, тĕрĕс кăтартусем парса пырать. Иртнĕ çулта вĕсем васкавлă заказсен планне ытлашшипех пурнăçланă. Пĕрремĕш кварталта та васкавлă заказсене вăхăтра пурнăçлама тăрăшаççĕ. Стахановецсем А. Игнатьев, М. Алексеев, В. Кожухов юлташсем сменăри нормăна 180—222 процент таран тултараççĕ. Çакнашкал лайăх ĕçлекенсем артельре сахал мар.

Ф. КОНДРАТЬЕВ.

Пĕр разъездăн çыннисем

Иртнĕ çуллахи кунсенчен пĕринче разъездри рабочисемпе стрелочниксем тата командирсем ĕç хыççăн пĕр çĕре пуçтаранна. Разъездри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Осипов сăмах каланă. Вăл тăван çĕршыв çине гитлерла фашистсем килсе тапăнни çинчен каласа, коллектива мĕншур вăйă хурса ĕçлеме чĕннĕ.

Калаçакансем урăх пулман. Мĕншĕн тесен вĕсен умĕнче тăракан ĕçсем пуриншĕн те ăнланмалла. Пуху хăй çине татăклă обязательствăсем илнĕ, тăван Хĕрлĕ Çара, фронта пур енĕпе те пулăшса пыма сăмах панă.

Разъездри командирсемпе рабочисем хăйсен сăмахне унтанпа тĕрĕссĕн пурнăçласа пыраççĕ. Коллективран хăшпĕр юлташсем фронта тухса кайрĕç. Çапах та коллектив хăйĕн ĕçне отлично туса пырать. Кашни çын хальхи вăхăтра икĕ çыншăн ĕçлет. Акă вĕсен результачĕсем: разъезд 1941 çулта грузсем тиес тата пушатас плана 280 процент тултарнă, линисем çинче нимĕнле çитменлĕх те пулман, поездсене йĕркеллĕ кĕтсе илсе, вăхăтра ăсатнă. Коллектив хĕле те лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ.

Кăçалхи январьпе февраль уйăхĕсенче çанталăк уйрăмах сивĕ тăчĕ. Çапах та вăл ĕçре нимĕн чухлĕ те чăрмав тумарĕ. Рабочисем 45 градуслă сивĕсенче те поездсене йĕркеллĕ кĕтсе илсе, вăхăтра ăсатнă, чутунçул линисене ялан тасатса, юсаса тăнă. Ырми-канми ĕçлекенсенчен пĕри—Сергей Асянин. Вăл стрелка хуçалăхне те, хăйĕн участокĕнчи чугунçула та ялан таса та юсавлă тытса тăрать. Çав вăхăтрах тĕрлĕ юсав ĕçĕсене те хăех тăвать.

Ун пек хастарлă çынсем разъездра сахал мар. Николай Черновский разъезд [illegible] пулса ĕçлет. Халĕ вăл дежурнăй пулса ĕçлет. [illegible]

Маруся Минеевăн чугунçул çинче ĕçленĕ ашшĕ вăрçă пуçлансанах фронта тухса кайнă. Çамрăк хĕрача ашшĕ вырăнне юлать. Кĕске вăхăтрах вăл стрелочница ĕçне вĕренсе çитет, халь вăл хăйĕн ĕçне отлично туса пырать.

17-мĕш участокри И. Петренко юлташ ертсе пыракан бригада та кăтартуллă ĕçлет. Бригада членĕсенчен уйрăмăнах И. Алексеев, Е. Климкина, Самойлов тата Ефимов юлташсем аван ĕçлеççĕ. Вĕсем хуть те мĕнле ĕçе те вăхăтра пурнăçлаççĕ, кирлĕ чухне вăхăта шутламасăр ĕçлеççĕ.

Мухтава тивĕçлĕ ĕçлекен коллективра уйрăмах разъезд начальникĕ паллă вырăн йышăнса тăрать.

1939 çулта Иван Никитича Мыслец разъездне начальник пулса ĕçлеме куçарнă.

Унтанпа вăхăт виççĕмĕш çул çине кайрĕ. Çак çулсем хушшинче çĕршывра пысăк улшăнусем пулчĕç. Çавăн пек улшăну Пырков юлташ пурнăçĕнче те, вăл ертсе пыракан коллективра та пулчĕ. Çамрăк коммунист Пырков ертсе пыракан коллектив малти рете тухрĕ. Вăл хăй те, ун коллективĕ те халь пачах çĕнĕлле, вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлесе пырать. Унăн пархатарлă ĕçне халь разъездра çеç мар, пĕтĕм Хусан чугунçулĕ çинче ĕçлекенсем те пĕлеççĕ. Ун çинчен час-часах хаçатсем çинче çыраççĕ, унран пример илсе ĕçлеме чĕнеççĕ. Икĕ çул каярах Пырков юлташа хисеплĕ грамота парса наградăланă, иртнĕ çулта вара вăл татах тепĕр награда илме тивĕç пулнă—СССР Çулйĕр Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович юлташ ăна «Ударнику Сталинского призыва» значокпа наградăланă.

Значкист, коммунист Пырков отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче [illegible]

Х. Л.

Англин сывлăшри çар вăйĕсен ĕçĕсем

Общинăсен палатинче авиаци министрĕ Синклер тухса калани

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер общинăсен палатинче Англин авиаци министрĕ Синклер сăмах каланă. Общинăсен палатине вăл Англин сывлăш çар флочĕ валли ассигновани планне çирĕплетме проект сĕннĕ, çав майпа сывлăшри çар вăйĕсен ĕçĕсем çинчен каласа панă.

Сăмах пуçламăшĕнчех Синклер хăй пĕр çул маларах общинăсен палатинче каланă сăмаха аса илтернĕ. Ун чухне вăл çапла каланă: противник Англи çине тата ытларах вĕçсе пырса тапăнать пулсан, унăн çĕрле вĕçекен бомбардировщикĕсен хисепĕ сахаланать кăна. Эпĕ калани тĕрĕсех пулчĕ, тенĕ Синклер.

Малалла Синклер—1941 çулти июнь уйăхĕнчен пуçласа Англин авиацийĕ хăй умне «вырăс союзникĕсене Германин пысăк çарне хирĕç питĕ анлăн, пур вăя хурса çапăçас ĕçре ытларах пулăшса пырас» задачăна лартни çинчен каласа панă.

Мальта таврашĕнче тата Африкăра,—тенĕ малалла Синклер,—Англи авиацийĕ нимĕçсене ирĕксĕрех ку районра чылай истребительсем тытса тăмалла тунă. Вăл Англи истребителĕсемпе бомбардировщикĕсем Францин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнчи çĕрĕсем çине пыра-пыра тапăннипе, истребительсем активлăн хурал тăнипе, Англи самолечĕсем проливсенче противникăн карапĕсем çине тата Германин промышленноçлă районĕсем, оккупациленĕ территорисенчи Германишĕн пысăк вырăн йышăнса тăракан объектсем çине активлăн тапăннипе пулса пырать. Самолетсем пыра-пыра тапăнса Бельгири тата çурçĕр Францири çĕркăмрăк шахтисемпе предприятийĕсене, противник валли тавар хатĕрлесе тăраканскерсене, пысăк сиен кӳнĕ. Сăмахран, акă, 5 уйăх хушшинче электричество станцийĕсене тата ыттисене çĕмĕрсе Лилль таврашĕнчи пысăк районра промышленность производствине ĕлĕк ĕçлесе тăнă чухнехинчен 50 процент таран чакарнă. Англи авиацийĕ иртнĕ çул хушшинче тăшманăн 823 истребительне пĕтерсе тăкнă; ку хушăра унăн хăйĕн 537 истребителĕ пĕтнĕ.

Англичансем Ливире наступлени пуçласа ярас умĕнхи 6 уйăх хушшинче Англи авиацийĕ противникăн сутуилӳ карапĕсене пурĕ 175.000 тонна тоннажлăх путарнă. 50 тонна таран водоизмещениллĕ шутланакан кимĕсене путарни тинçĕр çинче вăрçă ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыма хытă пулăшнă.

Англи авиацийĕ техника енчен епле вăйлă çинчен каланă май, Синклер Англи истребителĕсен хĕçпăшалĕ Германин чи лайăх йышши шутланакан истребителĕсен хĕçпăшалĕнчен те чылаях малта тăрать, тесе каланă. «Харрикейн» тата «Спитфайер» йышши самолетсен юлашки моделĕсем, чăнниппе илсе хаклас пулсассăн, пачах çĕнĕ йышши вăйлă самолетсем пулса тăраççĕ. Халĕ акă ку таранччен пачах пулман конструкциллĕ çĕнĕ йышши самолетсем туса кăларма хатĕрленеççĕ. Американецсем халĕ Англие çĕнĕ йышши пикировка тăвакан бомбардировщиксем ярса тăраççĕ.

Самолетсен конструкцийĕ çĕнелсе аталанса пынă май, бомбăсен конструкцийĕ те çĕнелсех пырать, тесе пĕлтернĕ Синклер. Англи самолечĕсем 1941 çулта пăрахнă бомбăсен йывăрăшĕ 1940 çулта пăрахнисен йывăрăшĕнчен 2 хут ытларах пулать. «Эпир Германие пит те анлăн тата май пур таран хăвăртрах, вăхăта вăрахла ямасăр сывлăшран тапăнма, бомбăсем пăрахса çĕмĕрме хатĕрленетпĕр»,—тенĕ Синклер.

Вăрçă малалла мĕнле сарăлса пырасси çинчен каланă май, Синклер çакăн çинче чарăнса тăнă: Гитлер çуркунне наступлени тума хатĕрленет, ку наступлени Российăна хирĕç пулать,—тенĕ вăл,—ку вăхăтра Англи те аякран пăхса тăрас çук. Англин бомбăсем пăрахакан авиацийĕ Германин çар хатĕрĕсем тăвакан промышленноçне тата транспортне хăюллăн çапа-çапа аркатса пымалла. Нимĕçсем хăйсем валли танк моторĕсем, авиаци, грузовик моторĕсем оккупациленĕ Франци территорийĕнче туса кăлараççĕ. Эпир вĕсене ним канăçлăмасăр çапмалла ĕçлесе тăма ирĕк парас çук.

Англи авиацийĕ кăçал хăй нумай вăй хурса хатĕрленсе аннине вырса вĕртмелле, хăйĕн пысăк ĕçĕн çимĕçĕсене тухса илмелле,—тенĕ юлашкинчен Синклер.

Америка войскисен çĕнĕ контингенчĕ Великобритание пырса çитнĕ

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка войскисен чылай пысăк отрячĕсем Çурçĕр Ирландин порчĕсенчен пĕринче анса юлнă. Вĕсене Америка войскисен главнокомандующийĕпе унăн штабĕн членĕсем, Англин çар министерствин представителĕсем, империпе генеральнăй штабĕн начальникĕ тата Олстерти (Çурçĕр Ирландия) официальнăй учрежденисен представителĕсем кĕтсе илнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 4-мĕшĕнче Лондона Америка войскисен çĕнĕ контингенчĕ пырса çитнĕ.

Индипе Китай хушшинче çĕнĕ çул тăваççĕ

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕш. (ТАСС). «Экономист» журнал пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Индирен Китая çӳреме тăвакан çĕнĕ çул Читтагонгран (Индия) пуçланса Чунцин (Китай) хулине çитмелле. Вăл çул Ассам текен ту-сăртлă район урлă каçса Тибетăн кăнтăр чиккипе иртсе тухмалла. Чан Кай-ши юлашки вăхăтра Индие кайса килнĕ сăлтавсенчен пĕри вăл — çак çул строительствине вĕçлесе çитермелли çинчен тата çак сăрт урлă каçакан пысăк шоссе çулĕпе епле усă курмалли çинчен калаçса татăлассипулнă. Çĕнĕ çула тăвас ĕç мĕнле пыни çинчен Китай влаçĕсем тĕплĕн пĕлтермеççĕ. Анчах та ку вăхăта унăн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне туса пĕтернĕ пулĕ тесе шутлаççĕ. Çулăн юлашки участокне тунă çĕрте 40.000 китаец ĕçлет. Çула питĕ васкаса тăваççĕ. Тĕлĕнмелле проектпа тума шутланă çул ăнăçлăнах пурнăçа кĕрсе пырать. Китаецсем шутланă тăрăх, Бирма çулĕ хупăннă хыççăн çĕнĕрен тăвакан Инди—Китай çулне уçиччен вăхăт пит те сахал иртмелле, çакна пула Индирен Китая вăрçă материалĕсем турттарас ĕç чарăнса тăмалла пĕрех пулать.

БАТАВИЕ ЭВАКУАЦИЛЕÇÇĔ

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Бандунгран пĕлтернĕ тăрăх, Батавирен эвакуациленме пуçланă.

СИНГАПУРТА МАССĂЛЛĂН АРЕСТЛЕНИ

ТОКИО, мартăн 6-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Сингапурта Японие хирĕç элементсене иккĕмĕш хут массăллăн арестленĕ. Пĕтĕмпе 70.699 çынна арестленĕ. Арестленисем хушшинче китаецсем нумай.

Ютçĕршывсенче

- Индире «Судо» ятлă çĕнĕ корвета туса пĕтерсе шыва янă. Ăна минăсене тытса пĕтерсе тăкма тата подводнăй лодкăсене хирĕç кĕрешме тунă.
- Голландипе Австрали правительствисем пĕр-пĕрин патĕнче хăйсен дипломатиллĕ представителĕсене тума йышăннă. Голландин Тегеранри посланникне барон Ван Восхола Канберрăри (Австралия) посланникĕ тунă, Австралин Лондонри уйрăм уполномоченнăйне Брюса Голландин Лондонри правительстви çумĕнчи Австрали посланникĕ тунă.
- Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви Кăнтăр Африкăна экономика енĕпе ĕçлекен миссие яма хатĕрленет. Ку мисси Кăнтăр Африкăри производствăна вăйлăлатма тата унтан хром, асбест, пăхăр тата стратегиллĕ ытти материалсем те илсе тухма пулăшĕ. [illegible] (ТАСС, мартăн 6-мĕш).

Вулав çуртĕнче литература çук

СОВЕТСКОЕ. Васкасси ялсоветĕ çумĕнчи вулав çурчĕ валли 1939 çулта çеç илемлĕ литература илнĕ. Унтанпа вара халиччен пĕр çĕнĕ кĕнеке те илмен. Вулав çуртне шкул ачисемпе колхозниксем чылаях пыраççĕ. Анчах та кĕнеке çитменни пурне те пăшăрхантарать. Ялсовет председателĕ Силизестров вулав çурчĕ отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче мĕнле вырăн йышăнса тăма тивĕçли çинчен пачах та маннă.

Вулав çурчĕн ĕçĕсене халех çĕнетмелле тата вулав çурчĕ валли кирлĕ литературăна çителĕклĕн тумалла.

И. ИЛЮШИН.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПРИСТАНЬ ЧЕБОКСАРЫ ДОВОДИТ ДО СВЕДЕНИЯ ВСЕЙ КЛИЕНТУРЫ, ЧТО **с 10 марта открывает ПРИЕМ ГРУЗОВ к отправлению, с сохранением их до открытия навигации.**

2—1 Пристань.

НЕФТЕБАЗЕ требуются на постоянную работу: **конюх, весовщик, охранники, слесарь.**

ТРЕБУЮТСЯ НА ПОСТОЯННУЮ РАБОТУ: плотники, столяры, кузнецы, слесари, каменщики и подсобные рабочие, мужчины и женщины.

Имеется столовая, жильем обеспечиваются.

С предложением обращаться по адресу: пос. Сосновка, г. Чебоксары, отдел кадров. 1—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

400 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 53 54 п. л.